# ЫВАЛСЕМ

## (3 пайла, 6 картинăллă драма)

ПЬЕСАРИ ÇЫНСЕМ

КАРАÇ МИХАЛИ.
УКÇИНЕ — унăн арăмĕ.
МИКИТ
ÇТАППАН    весен ывалесем.
САНТАР
МАРИÇ.
ВАЛЯ — унăн хĕрĕ
МИТРАХВАН.
СВЕТ ВАНЬКИ.
ТИМОШ.

Ĕçсем хальхи вăхăтра пулса иртеççе.

## ПЁРРЕМЁШ ПАЙЁ

### Пĕрремĕш картина

Кăрăç килĕнче. Репродукторта шăппăн: «Шупашкар калаçать. Ултă сехет те хĕрĕх пилĕк минут. Ирхи концерт итлĕр», — тени илтĕнет. Укçине кĕрет. Радиона тата хытăрах ярать. Çывăракан Микит тăрать те шнура розеткăран туртса кăларать. Каллех хăй вырăнне> кайса выртать. Çывăхрах автан хыттăн авăтса ярать. Микит тăрса ларать.

Микит. Пусса çиетĕп ку автана, паянах. *(Вырăн çинчен тăрать. Ăна-кăна пăтраштарса, тем шырать.)*

Укçине. Мĕн шыратăн?

Микит. Кăштах пар, анне.

Укçине. Çук. Пĕр тумлам та юлман. Ак, турă пур.

Микит. Турра ан асăн. Пуррине хам пĕлетĕп.

Укçине. Пур пулсан туп.

Микит. Тупатăп. Тупатăп та пĕр тумлам хăвармастăп.

Чылăй вăхăт хушши пĕрне-пĕри сăмах чĕнмеççĕ. Укçине кăмака умĕнче хăйĕн ĕçне тăвать.

Микит текех шырать. Шкафа пăтраштарнă чухне турилкке ӳкерсе ватать. Ванчăкĕсене пуçтармасăрах крааать çине кайса ларать.

Укçине *(ванчăксене пуçтарса).* Пĕтетĕн капла, ывăлăм. Туршăн та пĕтетĕн. Ма пуç тавра шутласа илместĕн?

Микит. Эп пĕтнипе тĕнче пĕтмест, анне.

Укçине. Вăл çаплах ĕнтĕ. Тĕнче пĕтмест. Тĕнче вăл хăй вырăнĕнчех юлать. Çынсем те... тырă акаççĕ, тырă выраççĕ, ача-иăча çитĕнтереççĕ, пурнăç тăваççĕ. Эсĕ ак!..

Микит. Мĕн, эпĕ, ну, кала мĕн?!

Укçине. Ан кăшкăр. Эп хăлхасăр мар, илтетĕп.

Микит. Мен енчен тĕрĕс мар пурăнатăп-ха эпĕ?

Укçине. Пур енчен те, ывăлăм, пур енчен те! Сахал мар асапланнă сире çын тăвас тесе.

Микит çывăрса кайнă, харлаттарать.

Çук ĕнтĕ, пулаймарĕ пуль санран, Микит, сын пулаймарĕ пуль.

Сантăр кĕрет. Тулта физзарядка туса, пилĕк таран çăвăннă, питшăллипе çанçурăмне сăтăрать.

*Ш*

Укçине. Аçта эс ирех?

Сантăр. Ĕçе.

Укçине. Ашшĕ... Чисти ашшех. Михаля та çавахчĕ... Çынсем ĕçе тăхăр сехет валли каяççĕ. Вăл пур, тул çути

палăрсанах — ял Советне... Апат та пĕçерсе ĕлкĕреймерĕм.

Кăрăç кĕрет.

Сантăр. Апат çиме кайран килетĕп. Петр Романыч тухса кайиччен колхоз правленине çитмелле.

Кăрăç. Мĕн эсир унпа пĕр чĕлхе тупаймастăр?

Сантăр. Культура çуртне пилĕк çул тăватпăр, туса пĕтерейместпĕр. Хулана стройматериалсем кайса илме машинăсем кирлĕ. Вăл пур: «Клубĕ тармĕ-ха, колхоз ĕçĕ мăй таран», — тет. Ун шучĕпе, клуб колхоз ĕçĕ мар.

Укçине. Килĕштерсе ĕçлĕр. Килĕштернине ним те çитмест. *(Тепĕр пӳлĕме кĕрсе каять.)*

Кăрăç. Хăçан туса пĕтеретĕр-ха? Ку таринччен патша керменĕ туса пĕтермелле.

Саитăр. Кăçал хута яратпăр.

Кăрăç. Хута ярсан тем пекехчĕ те, темĕн çав... Хамăр колхоз вăйĕпе тунă пулсан, тахçанах пĕтермелле. «Межколхозстроя» шансан... Такам хуçи вĕсен, пĕлсе пĕтереймĕн.

Сантăр. Эсĕ кӳренмен-и, атте?

Кăрăç. Мĕншĕн? Сана ял Совет председателе пулма суйланăшăн-и? Айван!.. Урăхла савăнăç пулма пултарать-и-ха маншăн, енчен те ашшĕн ĕçне малалла ,-туса пыма ывăлĕ тивĕçлĕ пулнă пулсан? Çук, Сантăр... Савăнатăп! Тата ак мĕн: эсĕ мана пуçĕпех «списать» тумастăн пулĕ тетĕп.

Сантăр. Мĕн эсĕ, атте? Яланах санрап пулăшу кĕтетĕп.

Кăрăç. Пĕр енчен, ĕçлеме çăмăл халĕ, тепĕр енчен, халăхпа ĕçлеме йывăрланса пырать. Пур чухне те çамрăксен шухăш-кăмăлне ăнланаймастăп. Тен, ку ватăлса пынипе те пуле.

Урампа Çвет Ваньки юрласа иртсе кгять: «Жена там по мужу скучает и плачут детишки гурьбой».

Сантăр. Ванька. Свет Ваньки. Çутăлнă-çутăлман. Араме вилнĕренпе урăлса курмарĕ.

Кăрăç. Ывăлне хĕрхенесчĕ.

Сантăр. Ĕçне тутăрччĕ пĕрех хут. Нумай çĕрте элек тропралуксем кăшт çил вĕрнипех, пĕоне-пĕри перĕнс" хĕлхем кăлараççĕ. Миçе 'хутчен каланă. Тĕрĕслемест-х çавах.

Кăрăç. Инкек пуласса кĕтет.

Сантăр тухса каfive.

К ă р ă ç. Вăталăххи ура çине тăчĕ-ха, такăр çул çине тухрĕ. Мана тепри канăç памасть, асли.

У к ç и н е. Çывăрать-ха, ав. Çутăлас умĕн килсе выртать те...

К ă р ă ç. Тăрат.

У к ç и н е. Çывăртăр. Мĕн тăватăн унпа, урăлса та çитмен.

К ă р ă ç. Микит!..

Микит тепĕр енне çаврăнса выртать.

Микит, теççĕ!..

М и к и т. Мĕн, атте?

К ă р ă ç. Тар.

М и к и т. Тăма пулать, мĕнех. *(Тăрса ларать.)*

К ă р ă ç. Сак çине лар. Тӳшек çинче лараканпа калаçма пĕлместĕп.

М и к и т. Сак сине ларма та пулать, темех мар. *(Сак çине куçса ларать.)*

К ă р ă ç. Ну, мĕнле пурăнатăн, ывăлăм?

М и к и т. Ма ыйтатăн, атте, курмастăн-им мĕнле пурăннине?

К ă р ă ç. Тĕрĕс, куратăп. Куратăп, ывăлăм, лайăх пурăнатăн эсĕ. Калама çук лайăх! Урăхла шухăшласа та кăларас çук. *(Пĕр хушă чĕнмеççĕ.)* Намăс мар-и сана?

У к ç и н е. Арăмна хуса ятăн: сĕтĕрĕнсе çӳрех ĕнтĕ кĕрт йытти пек, паян кунта, ыран унта.

М и к и т. Эп хуса яман ăна. Хăй тухса кайнă.

У к ç и н е. Аçта тӳссе пурăнтăр вăл санпа.

М и к и т. Хăвах каларăн-çке: «хĕсĕр арăм тупса янă» тесе.

К ă р ă ç. Тахăшĕ хĕсĕр эсир, пĕлсе пĕтерейменĕн.

У к ç и н е. Араму çинчен, ав, хаçатра çыраççĕ\, тет. Патшалăха пит нумай сĕт суса пама пулнă, тет-и?

Микит чĕнмест.

Мĕн чĕнместĕн?

М и к ит. Пит лайăх.

У к ç и н е. Мĕн лайăх?

М и к и т. Нумай сĕт суса илни.

У кç и не. Мĕн çитмест сире? Пурте пур. Тăхăнма, çиме çителĕклĕ. Яла култарса пурăнатăр. Мирлешсе кайăр та пурăнăр çынсем пек.

К ă р ă ç. Намăс та мар-и тетĕп?

М и к и т. Камран намăс пултăр? Эп никамăнне те вăрламан.

К ă р ă ç. Ĕпле вăрламан? Вăрланă, арамунне!..

М и к и т. Эпĕ унăнне çип те илмен. Мĕнпе килнĕ, çавăнпа тухса кайнă.

К ă р ă ç. Çип те илмен апла? Çип? А, чыс? Вăл мĕн иккенне пĕлетĕн-и эсĕ? Чысне вăрларăн унăнне, качча илсе — хĕр чысне! Ку вăрлани мар-и? Çаратнă, ывăлăм... вăрланă! Этем чысне вăрланă эсĕ!

М и к и т. Хăвăрах пит лайăх пĕлетĕр-çке, эп ăна хуса яман. Вăл хăй тухса тарчĕ. Енчен те эпир пĕрле йĕркеллĕ пурăннă пулсан, килтен тухса кайнă пулăттăм-и? Тăвату çул хушши, эсир калашле, «тĕнче касса» çӳренĕ пулăттăм-и?! Тен, çак пурнăç патне те пырса тăрăнман пулăттăм. Енчен те... Э-э-э... Мĕншĕн халь аса илес тăват-пилĕк çул каялла пулса иртнĕ япалана? Пурпĕрех пирĕн пĕрле пурнăç пулас çук.

К ă р ă ç. Юрать, кун пирки аса илмĕпĕр. Калаçу урăх пирки. Мĕнле пурăнма шутлатăн-ха эсĕ малашне? Сынсен ачисем ялта, тăван колхозра тар юхтарса ĕçлеççĕ. Ашшĕ-амăшĕсене пулăшса, çемье пуçтарса пурăнаççĕ. Эсĕ, Микит, вербовкăпа тухса кайрăн та тăвату çул ытла «тĕнче касса» çӳрерĕн.

М и к и т *(хăюсăртарах)*. «Тĕнче касса» çӳремен, атте, аслă стройкăра пулнă. Çĕнĕ электростанци тунă. Халĕ яла канма килнĕ.

К ă р ă ç. Электростанци тунă тетĕн? Электростанци тунă çĕртен çара кут килсе кĕмеççĕ. Юрĕ... Канма килнĕ тетĕн? Виçĕ уйăх канатăн. Виçĕ уйăх тӳссе пурăнатпăр сана.

Микит чĕнмест.

Мана сан пирки ял халăхĕ пӳрнепе тĕллесе кăтартать. «Сан хăвăн та аслă ывăлу эрех пички ăшнех кĕрсе ларнă», — теççĕ.

М и к и т. Мĕн эсир мана пĕрмаях тапăнатăр. Эпĕ канма килнĕ... татах калатăп, канма. Право пур-и манăн канма е çук-и? Ун пирки Конституцире те çырнă. «Этемĕн канма право пур», тенĕ.

К ă р ă ç. Эс Конституцирен пĕтĕмпе те çав йĕркесене кăна астуса юлнă пулас.

У к ç и н е. Эпир сире ӳстернĕ чухне канасси çинчен шутламан-çке, çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçленĕ. Сурса сурчак ӳкмен чух шартлама сивĕре те, сывлăш тухмалла мар вĕрире те тар юхтарнă.

К ă р ă ç. Пирĕн ĕмĕр тăршшипе те отпуск пулман. От-

пуск мĕн иккенне те пĕлмен эпир. Пирĕн тивĕç пулманим канма? Е Конституци пирĕншĕн мар-им! Тен, унта сирен пирки кăна çырнă? Пулман пирĕн отпуск, канмалли кун та пулман, ывăлăм. Ман пата халăх çĕрле те, кăнтăрла та, канмалли кун та, ĕç кунĕнче те савăнăçпа та, инкекпе те кантура та, киле те пынă. Халĕ те пыраççĕ. Урăх канма ирĕк памастăп эп сана. Çитет, пуç йĕри-тавра шутласа илме вăхăт.

Микит. Ан хăрăр, нумаях çисе пурăнмăп сирĕн çăкăра. Еç темĕн чухлех, таçта та пур. Часах Красноярскинчен чĕнсе ямалла. Унта каятăп.

Укçине. Ёмĕр тăршшĕпех тĕнче тăрăх çапкаланса çӳресе те пурнăç пулмĕ. «Выртан каска мăкланать, çӳрен каска якалать», — теççĕ.

Микит. Ваттисен кивелнĕ сăмахĕ.

Кăрăç. Мĕнле савăнтăмăр эс çуралсан, ывăлăм. Пукане пек пăхрăмăр сана. Эс çуралсан тепĕр кунне сан ятупа пӳрт умне йăмра лартрăм. Чăваш йăмри. Унтан Сантар çуралчĕ, кайран—Çтаппан. Вĕсен ячĕпе те йăмрасем лартрăм. Ав, курса савăнăр! Урамалла виçĕ чӳрече, кашни чӳрече умĕнче пĕрер йăмра кашласа ларать. Пĕринчен тепри парка ӳсеççĕ. Сирĕн йăмрасем!.. Иртен-çӳрен ăмсанать. Акă мĕн, Микит, аннӳ умĕнче сăмах паратăп: этем ратне кĕмесен, яла култарса пурăнсан касса пăрахатăп йăмруна. Тымарĕ-мĕнĕпех кăкласа ывăтатăп.

Пĕр хушă чĕнмеççĕ.

Микит. Пĕтрĕ-и?

Кăрăç. Пĕтрĕ... Халлĕхе...

Микит. Эпĕ ирĕклĕ-и?

Кăрăç. Мĕнле калаçать вăл ашшĕпе, йытă пичĕ.

Микит. Çитет, атте!.. Пĕчĕк ача мар эпĕ текех. Кашниех мана мĕнле пурăнмаллине вĕрентет.

Кăрăç. Эп саншăн «кашни» мар, аçу! Ашшĕпе амăшĕ нихăçан та ачисене япăх тăвасшăн мар.

Укçине. Ара, кайса ил те арăмна, пурăнăр çынсем пек. Çитет яла култарса.

Микит. Юратмасть вал мана, пурăнмастăп эпĕ унпа. *(Тухса каять.)*

Кăрăç. Аçтан-ха вăл çавăн пек пулса кайнă? Пурне те пĕр пек пăхнă-çке. Пурне те пĕр шкултан вĕрентсе кăларнă. Ăçтан-ха вăл çавăн пек пулса кайнă? Ăçтан?

Укçине. Тен, ăс кĕрĕ.

Кăрăç. Çук ĕнтĕ, пĕр вăтăртан иртсен, ăс кĕресси пулмасть пуль,

У к ç и н е. Тен, ытлашши хытă каласрăмăр?

К ă р ă ç. Калаçса пăхнă эп унпа темле те, ыррăн та калаçса пăхнă. Усси?..

У к ç и н е. Тепле пулсан та, хамăр ывăл-çке.

К ă р ă ç. Хамăрăн çав, карчăк, хамăрăн. *(Пауза.)*

У к ç и н е. Пульницăран килни виçĕ кун çитрĕ, нимĕн те каламастăн. Тухтăрсем мĕн теççĕ?

К ă р ă ç. Мĕн тейĕç тухтăрсем... Иртсе каять теççĕ. Ав, пĕр хутаç эмел йăттарса ячĕç. Ĕç те ĕç.

Ç т а п п а н кĕрет. Чĕнмеççĕ.

Ç т а п п а н. Мĕн пулнă? Виле çинчи пек шăп.

У к ç и н е. Эсĕ мĕн чĕркуççи таран йĕп-йĕпе?

У к ç и н е. Сывлăм ӳкнĕ.

К ă р ă ç. Аçта çапкаланса çӳретĕн сывлăм ӳкиччен?

Алăка чăрмаласа, йытă йынăшать.

Ку тата мĕн?

Ç т а п п а н. Тарзан.

К ă р ă ç. Мĕнле «Тарзан»?

Ç т а п п а н. Йытă.

К ă р ă ç. Пĕлетĕп: кашкăр мар. Аçтан сĕтĕрсе килтĕн?

Ç т а п п а н. Володька пачĕ. Пиччĕшĕ хуларан илсе килнĕ.

К ă р ă ç. Пиччĕшĕ ăна валли илсе килнĕ пулсан, мĕншĕн сана пачĕ вăл?

Ç т а п п а н. Вĕсен çăмламас кушак аçи пур. Çĕпĕр кушакки. Çапăçаççĕ.

У к ç и н е. Вара эсĕ илсе килтĕн?

Ç т а п п а н. Илсе килтĕм.

У к ç и н е. Эс, мĕн, сунарçă-им? Вăрăсем çук ялта. Мĕне кирлĕ сана йытă? Парса яр урăх çынна. Тен, кама та пулин кирлĕ.

Ç т а п п а н. Ку вăл ахаль йытă мар. Аратлă та_та йăхлă йытă. Амăшĕ выставкăра ылтăн медаль илнĕ, тет.

У к ç и н е. Аташатăн кирлĕ мара. Йытта кам медаль парать?

К ă р ă ç. Тарзан кăна çитменччĕ пирĕн килте. Пелтĕр картиш тулли кролик ĕрчетсе ятăн, пахчара купăста хăвармарĕç. Хуса яр.

У к ç и н е. Пурăнтăр ĕнтĕ. Чĕрчунсене, кайăк-кĕшĕке юрататать ачаранпах.

М а р и ç кĕрет. Хуткупăс çĕкленĕ.

К ă р ă ç. Эс мĕн, Мариç, ирех хуткупăс йăтса çӳретĕн? Туйра пулман пуль-çке?

М а р и ç. Çук-ха, Михаил Герасимчă. Пахчара иртнĕ каç туй туса кайнă. Хăяр йăранне кĕлте аштарнă пек аштарса кайнă. Хуткупăсне илсе кайма маннă. Хурăн çумне лартса хăварнă.

К ă р ă ç. Камсем пулĕ?

М а р и ç. Çавна пĕлме тесе килтĕм те, Михаил Герасимчă. Такам аллинче курнă пек çак хуткупăса. Тытса пăхăр-ха, тен, палласа илетĕр.

Кăрăç, хуткупăся тытсанах, Çтаппанăн иккенне палласа илет. Çтаппан та мĕн пулса иртнине тавçăрса илет, шăвăнса тухса тарма тăрать.

К ă р ă ç. Эс ăçта? Тăхта!..

М а р и ç. Хăярне çеç татса кайнă пулсан татахчĕ. Аврине йăлт тăпăлтарса пĕтернĕ, мур ачисем.

У к ç и н е. Çтаппан халиччен çын пахчине кĕнĕ тенине илтмен никамран та.

К ă р ă ç. Ан хӳтĕле. карчăк! Кала, Çтаппан, кампа кĕнĕ эсĕ Мариç пахчине? Мĕншĕн кĕнĕ? Сана, мĕн, килти хăяр çитмест-и? Ятарласа икĕ йăран лартнă.

М а р и ç. Кала, Çтаппан, кампа пулнă эс унта?

К ă р ă ç. Кала!

Ç т а п п а н. Никампа та мар. Пĕччен пулнă.

К ă р ă ç *(пăтари вĕрене илет).* Аçупа-аннӳне намăс кăтартма-и? *(Çапать.)* Çын пахчине кĕме?! Каçару ан кĕт манран. Айăпа кĕтĕн-тĕк, ответ тыт. Иĕммӳне хыв! Иĕм айăплă мар эс ашкăиса çӳренĕшĕн!

Çт а п п а н. Мĕн эсĕ, атте, пĕчĕк ача мар-çке эпĕ. Сынсен умĕнче... Атя мунчана. Унта хĕне аллу каниччен.

К ă р ă ç. Калаçса тăрать тата. Хыв!

М а р и ç. Кирлĕ мар ун пек, Михаил Герасимчă. Апла ан намăслантарăр ывăлăра. Эп, мĕн, чăннине пĕлес тесе анчах...

У к ç и н е. Чăнах, мĕнле намăс мар, ашшĕ, çын умĕнче ывăлна çавăн пекех...

К ă р ă ç. Намăс?.. Мана намăс-и?! Ашкăнчăка кантрапа çаптарнăшăн-и? Темле йывăр вăхăтра та эпир çын пахчине кĕмен. *(Кантрине ывăтса ярать.)* Виçĕ кун урама кăлармастăп. Урамра курсан-и, чунна кăларса илетĕп! *(Тепĕр пӳлĕме çавăтса кĕртсе ярать.)*

-У к ç и н е. Туршăн та, ыран-паян çара илсе каяççĕ ывăлăмăра. Эсĕ пур.

К ă р ă ç. Нумай ачашланă эпир вĕсене, карчăк... Нумай ачашланă. Ак халĕ мĕнпе тавăраççĕ вĕсем пире.

М а р и ç. Эп мĕн... каям-ха апла.

К ă р ă ç. Ан кулян, Мариç. Хăярне, кирлĕ пулсан, пирĕн патăртан килсе ил. Хамах татса парса яратăп.

М а р и ç. Мĕн хăярĕ унта... Лайăххăн пулса та çитыен. Калатăп-çке, аврине хуçса-ватса пĕтернĕ. Лартса, шыв сапса ӳстернĕ те... Мăшкăл!.. *(Мариç каять.)*

К ă р ă ç *(питне аллисемпе хупласа, чылайччен ларать).* Карчăк, тен, вĕсем мана кӳренеççĕ? Хамшăн мар-çке, вĕсемшĕн... Вĕсене лайăх пултăр тесе. Тен, эпĕ ахалех вĕрилентĕм?.. Тен, ки.рлĕ марччĕ? Э?..

У к ç и н е. Мĕн пулчĕ сана, Михаля?

К ă р ă ç. Нимех те мар. Аслă пулсан ăнланса илĕç-ха хăçан та пулин. Аса илĕç ашшĕне.

У к ç и н е. Калаçатăн тем... Ыран-паян вилес" сын пек.

Кăрăç кайма пуçтарăнать.

Каллех апат çимесĕрĕх.

К ă р ă ç. Çиес килмест ман. *(Тухса каять.)*

Ç т а п п а н тухать.

У к ç и н е. Ăçта каян?

Ç т а п п а н. Мĕн тăвас ман? Кунĕпех çакăн пек хупăнса ларас-и?

У к ç и н е. Ав, çутă шутлаканнине ларт. Илсе хуни çулталăк çитет, çавна лартма вăхăт тупаймастăр. Миçе арсын килте. Çвет Ванькине шансан çук ĕитĕ. Хăй яланах плитапа апат пĕçерет. Эпир, ав, утюг та чикместпĕр. Укçине пĕр пек тӳлес пулать.

Ç т а п п а н. Ну, ылтăн пуç санăн, анне! Чăнах, ахаль лариччен ĕç тупăнчĕ. *(Турăш кĕтессине пырать.)* Э-э, ан не, ку чăрмантарать. Илсе хурас пулать.

У к ç и н е. Урăх çĕрте вырăн çук-им?

Ç т а п п а н. Урăх çĕрте. меллĕ мар. Мĕн тума кирлĕ вăл сана? Чиркĕве çӳреместĕн, кĕлтумастăн.

У к ç и н е. Ан тĕкĕн, тăтăр. Хурмĕшĕн те пулин тăтăр.

Ç т а п п а н. Вăхăтлăха çеç. Чăрмантарать вăл мана. Счетчикне лартсан, вырăнне хуратăп.

У к ç и н е. Асту, çĕмĕрсе на парах. Аслаçуран юлниех. *(Тепĕр пӳлĕме кĕрсе каять.)*

Ç т а п п а н. Ан хăра, çĕмĕрместĕп. *(Турăша илсе канака хыçне кайса хурать.)*

Т и м о ш килсе кĕрет.

Т и м о ш *(сăпайлăн калаçать).* Сывă пурăнаççĕ-и ял-йышсем, хурăнташсем, кӳрĕш-арăшсем?

Çтаппан чĕнмест. Тĕлĕнсе пĕхать.

Палламастăн-им? Паллама-а-стăн, паллах. Эп ялтан тухса кайнă чух эсĕ сĕтел айĕнче упаленеттĕн.

Ç т а п п а н. Кам пултăр, ара, эсир?

Т и м о ш. Тимофей. Тимош теççĕ мана. Сирĕн кӳршĕ. Пирĕн çурт вырăнĕнче халĕ вĕлтрен ашкăрса ларать. Ав, хирĕç. Çырма хĕрринче. Çав вырăнта Арçук Трихванĕсем пурăннă. Илтмен-и?

Ç т а п и а н. Илтнĕ анне каланине.

Т и м о ш. Шăпах çавсен ывăлĕ пулатăп та эпĕ — Тимош. Ну, здравствуй! *(Алă тытаççĕ.)* Мĕн ятлă-ха эсĕ?

Ç т а и и а н. Çтаппан.

У к ç и н е тухать. ,

Т и м о ш. Укçине аппа! *(Хирĕç пырса алă парать.)* Сывă пурăнатăр-и? Ёлĕкхи пекех... Улшăнман та темелле.

У к ç и н е.Туршăн та, палласа илеймерĕм. Кам пултан, ара, эс?

Т и м о ш. Эх, Укçине аппа, Укçине аппа... Эпĕ сана ют çĕршывра пулсан та палласа илмелле.

У к ç и н е. Эпир, ватă çынсем, сахал улшăнатпăр та... Таçта, Трихван хăта сăнĕ пур пек. Çавăн ывăлĕ мар пуль?

Т и м о ш. Шăпах çавăн.

У к ç и и е. Тимахви?

Т и м о ш. Шăпах çавă.

У к ç и н е. Халь, халь, кур-ха эс, мĕнлерех пулса каина! Чăвашла та манман.

Т и м о ш. Тăван чĕлхене епле манăн, Укçине аппа. Эпĕ ăна виличчен пурăнсан та манас çук.

У к ç и н е. Çав ĕнтĕ, çав... Ăслă çынсем çавăн пек. Миçе çул иртрĕ ĕнтĕ эс ялтан тухса кайни. Вунă çул та çитрĕ пуль?

Т и м о ш. Вунтăватă çул та пилĕк уйăх çитесси виçĕ кун.

У к ç и н е. Э-э, вунтăватă çул! Нумай çав, нумай...

Т и м о ш. Ну, хăвăр мĕнле пурăнатăр?

У к ç и н е. Хамăр, мĕн ĕнтĕ... пурăнкалатпăр майĕпен. Ывăлсем ӳссе çитрĕç. Савăнмалли кăна юлчĕ. Сантăр ялта ял Советĕнче ĕçлет. Çтаппанăн, ав, кăçал ят тухать. Вунă çул пĕтерчĕ те вĕренме кĕреймерĕ. Салтака кайса килтĕр-ха, унта куç курать.

Тимош. Михаил Герасимчӑ ҫӳрет пулӗ-ха?

Укҫине. Михаля ҫӳрекелет те, пӗрмаях чирлет.

Тимош. А-а... Микит? Микит килтех-и?

Укҫине. Микит килтех. Аҫта кайтӑр, килтех. Ара, мӗн ура ҫинчех тӑратӑн-ха. Иртсе лар эс, Тимахви, иртсе лар. Чӑматанне чӑлана кӗртсе лартам. Халь ҫине ниҫта та каймастӑн пуль?

Тимош. Аҫта каяс, Укҫине аппа? Ман кунта сирӗнсӗр пуҫне ҫывӑх ҫын та ҫук.

Укҫине. Ҫапла пулмасӑр, ҫапла... Килӗр-ҫуртӑра ӗнтӗ, пур пеккине, Хурамапуҫа качча тухнӑ аппу сутса кайре. Хуралтӑсем тӑрне улӑм витнӗ те, ҫумӑр кайса ҫӗрсе лараҫҫӗ терӗ пуль.

Тимош. Пӗлетӗп. Илтрӗм-ха.

Микит кӗрет.

Микит. Мӗнле йытӑ унта, килкартинче? Чӑхсем кашта ҫинчен анма та хӑраҫҫӗ. Автанӗ ҫатан ҫине хӑпарса ларнӑ.

Укҫине. Ав, Ҫтаппан таҫтан сӗтӗрсе килнӗ. *(Ҫтаппана.)* Кӑкар! Чӑх-чӗпсене тытса пӗтерет ак.

Ҫтаппан. Ан хӑра, чӑх тытакан йытӑ мар вӑл.

Микит *(Тимоша асӑрхать).* Тимофей! Тинех! *(Ыталашаҫҫӗ.)* Анне, Тимахви ку, Арҫук Трихванӗн...

Укҫине. Паллашрӑмӑр-ха. Миҫе ҫул курманни. Улшӑнса кайнӑ. Унта-кунта курас пулсан, пуссан-кассан та паллаяс ҫук.

Микит. Анне, эпир унпа малтанхи икӗ ҫул Красноярскинче пӗрле ӗҫленӗ.

Тимош. Ӑнсӑртран тӗл пултӑмӑр... Стройтрест общежитине пынӑччӗ те... Пӑхатӑп — ҫыру выртать. Чӑвашран ҫырнӑ. Шыраса тупрӑм — Микит. Хамӑр ял, кӳршӗ, хурӑнташ! Пӗлетӗн-и, Укҫине аппа, мӗнле савӑнтӑмӑр.

Укҫине. Чӑнах... Сӑртпа сӑрт тӗл пулмасть, теҫҫӗ. *(Тухса каять.)*

Тимош. Ҫынпа ҫын тӗл пулать...

Микит. Ну, мӗн эсӗ ют ҫын пек. Хывӑн. Лар сӗтел хушшине. Килти пек пул, Тимоша! *(Тимоша тагах ыталать.)* Ирӗке тухрӑн апла? Мӗн чухлӗ ӗмӗтленнӗ эпир ҫа~ куна! Икӗ ҫул... Икӗ ҫул!..

Тимош. Ну, ну, мӗн эсӗ ҫемҫелсе кайрӑн. Нервӑсе санӑн йӗркеллех мар курӑнать, тӑванӑм.

Микит *(аллине сулса).* А-а... Нумайлӑха-и?

Тимош. Пурӑнсан курӑнӗ.

М и к и т. Пĕччен эп кунта, Тимош, тăр-пĕччен! Никам та ăнланмасть мана. Кичем!

Килкартинче йытă вĕрни, чăх-чĕпсем çуйхашни илтĕнет.

У к ç и н е" *(юнланса пĕтнĕ автан çĕклесе кĕрет. Хăй дав тери тарăхнă).* Пĕтерет ĕнтĕ чăхсене вăрă-хурах. Пĕр-тен-пĕр автана пăвса пăрахнă! Хам та, ухмахланса, ус-ратăр терĕм. Пурăннă ку таранччен йытăсăрах!..

М и к и т. Автана? Аранах... Çутăлнă-çутăлман çухă-ратчĕ-ха, çывăрма памастчĕ.

У к ç и н е *(тарăхса).* Халь ĕнтĕ çывăр, пехлет, мĕн чух-лĕ çывăрас тенĕ, çавăн чухлĕ.

М и к и т. Вăт куншăн ĕçме те юрать. Давай, анне, кă-ларса ларт запас лараканнине, Тарзан автан пусса панă ятпа ĕçер!..

Т и м о ш. Юратмастăп эпĕ йытăсене.

М и к и т. Епле юратас мар-ха ăна? Халь ĕнтĕ кăнтăр-лаччен лăпкăн çывăрма пулать. Анне...

У к ç и н е. Килте çук, туршăн та. Ёнер кўршĕсем сăра тунăччĕ, кайса килем.

М и к и т. Сăра?.. Мĕн вăл сăра?

Т и м о ш. Кирлĕ мар, Укçине аппа, ан чăрманăр. Ма-газин уçăччĕ-ха, атя, Микит, йăпăрт кайса килетпĕр.

М и к и т *(тухса кайнă май).* Награда паратпăр куншăн санăн йыттуна, Çтаппан. Ха-ха-ха!..

Тухса каяççĕ.

У к ç и н е. Халех хуса яр, çăва патне! Шăрши-марши ан пултăр килте! Мĕн пăхса тăран? Юлашки чăхсене пăв-са пĕтертĕр-и?

Ç т а п п а н. Ăçта хуса ярас ăна, шел-çке? Кăкарса хунă вĕт, пурăнтăр.

У к ç и н е. Автансăр тăратса хăварчĕ. Мĕн тери хнтре юрлатчĕ. Ялта çукчĕ ун пек автан.

В а л я кĕрет.

Men, каллех хăяр пирки-и?

В а л я. Мĕнле хăяр?

Ç т а и п а н. Тăхта, анне.

У к ç и н е. Анну тин кăна килсе кайрĕ. Хăяр йăранне таптаса пĕтернĕ тет.

В а л я. Кх-хик!.. Нимĕн те пĕлместĕп. Çтаппан, сан

военкомата каймалла, комиссине. Повестка кĕртсе пама каларĕç.

Ç т а п п а н. Хăçан?

В а л я. Ыран вунă сехетре, тет. *(Повесткине парать.)*

У к ç и н е. Çтаппанăн кăна-и?

В а л я. Унăн кăна мар. Захар Петин, Кăлăкла Васçин, Кăкшăм Ваççин, Тулăксăр Микулан, э-э... ялтан пурĕ вуникĕ ачан.

Ç т а п п а н. Тинех!..

У к ç и н е. Уссе çитрĕ... Кĕçĕнни те ӳссе çитрĕ, çын пулчĕ. Çитĕнтер вĕсене, çунат хуш кăна. Вĕçеççĕ те каяççĕ йăваран.

Ç т а п п а н. Ан ӳлеш, анне. Кĕркуннесĕр пĕрех илсе каймаççĕ. Комиссине кăна каймалла.

В а л я. Мĕншĕн хурланатăр, Укçине аппа? Халь вăрçă вăхăчĕ мар.

У к ç и н е. Çапла, вăрçă вăхăчĕ мар. Ывăл çитĕнтерсе, килтен кăларса ярса пăхăр-ха. Вара пĕлетĕр. Çăмăл тетĕр пуль.

Ç т а п п а н. Çитет, анне.

У к ç и н е. Çитет... Сана мĕн? Эс тухатăн та каятăн. Саншăн шухăшласа кулянса пурăн кунта. *(Тухса каять.)*

В а л я. Каятăн.

Ç т а п п а н.

Эп кайии чĕрӳне пăлхатĕ,
Уйрăлу хурлăх-тунсăх çуратĕ.
Инçе çул шиклĕ туйăм вăратĕ,
Икĕ çул сан чунна хăратĕ.
Эп килни чĕрене çутатĕ,
Тĕлпулу самантневаскатĕ.
Инçе çул пире, тусăм, çывхартĕ,
Икĕ çул... чунсене тасатĕ*.

Кам çырнă?

В а л я. Поэт.

Ç т а п п а н. Пĕлеймерĕн. Хам çырнă. *(Вальăна халиччен курман пек сăнаса пăхать.)* Çивĕтӳсем санăн...

В а л я. Мĕнле?

Ç т а п п а н. Хитре.

В а л я. Атя.

Ç т а п п а н. Аçта?

В а л я. Утă çулма. Пĕтĕм çамрăк унта пулать.

Ç т а п п а н . Эсĕ те каятним?

В а л я. Каймасăр.

Сăмахĕсем Ю. Сементерĕн.

Ç т а п п а н. Ну, кай.

В а л я. Мĕн эсĕ?

Ç т а п п а н. Нимĕн те...

В а л я. Тутуна тăснă пĕр шит. Ну, атя, тилмĕрттерсе ан тар.

Çтаппан. Юрамасть. Арестленĕ мана. Виçĕ куна.

В а л я. Кам?

Ç т а п п а н. Атте. Йăлтах сан пирки.

В а л я. Мĕншĕн ман пирки?

Ç т а п п а н. Анну паян ирех килсе кайрĕ. Хăяр йăранне йăлт аштарса пĕтернĕ тет.

В а л я. Аçтан пĕлнĕ-ха вал эсĕ пулнине?

Ç т а и и а н. Купăса эпĕ хурăн çумне лартнă пулнă. Илме манса кайнă. Эсĕ те курса илсе кĕмен.

В а л я. Каларăм сана тытаймастăн тесе. Тытаймарăн. Хăяр йăранне таптаса пĕтернĕ.

Ç т а п п а н. Тупнă хăяр йăранĕ. Атте хамăрăнне татса парать. Юрать, кай. Атте курсан лекет. Халь манăн никампа та курнăçма юрамасть.

В а л я. Арестленĕ пулсан, мĕнле кайăн-ха военкомата?

Ç т а п п а и. Ирĕке кăларать. *(Чĕнмеççĕ.)* Кай. *(Хачă кăтартать.)* Унсăрăн çивĕтӳсене касса илетĕп. Хитрескерсене.

В а л я. Мĕн эсĕ пĕрмаях ман çивĕтсене тĕкĕнетĕн? Чăрмантараççĕ-им вĕсем сана?

Ç т а п п а н. Юрататăп эпĕ... сан çивĕтӳсене. Ну, кай...

Валя тухса кайма тăрать, ăна хирĕç Т и м о ш кĕрет. Кăштах хĕрĕнкĕ.

Т и м о ш. Сывă-и?

В а л я. Сывах-ха, хăвăр мĕнле пурăнатăр?

Ç т а п п а н. Паллашăр, ку Валя.

Т и м о ш *(алă парса)*. ТиМофей... Кам хĕрачи пулатăрха эсир?

В а л я. Эсир пĕрех паллас çук. Мариçĕн.

Т и м о ш. Леш касри Мариçĕн! *(Вальăна куç сиктермесĕр пăхать.)*

В а л я. Çавăн.

Т и мо ш. Эп кайнă чух эсир *(аллипе кăтартса)* ак мĕн-ле пулнă. Да-а-а, ӳсеççĕ çамрăксем, эпир, ак, ватăлса пыРатпăр.

В а л я. Çапла пуль, ватăлни курăнмасть-ха.

утаппан. Ну, кай, кай, пакăлтатса ан тăр!..

**1** имоша. Ну, Степа, мĕнле эсĕ хĕрачапа çавăн пек... канттам калаçатăн,

В а л я. Кунта вӗсем пирӗн пурте ҫавӑн пек... кӑнттам. Ҫепӗҫ калаҫма пӗлмеҫҫӗ.

Ҫ т а п п а н. Кай тенӗ! Кая юлатӑн ак.

В а л я . Кайрӑм. Тепре куриччен. *(Валя каять.)*

Килкартинче йытӑ вӗрни, Микит хаяррӑн кӑшкӑрса яни илтӗнет.

М и к и т сасси. О, шуйттан!

Т и м о ш . Юратмастӑп эпӗ йытӑсене.

М и к и т чупса кӗрет. Шӑлаварне ҫурса антарнӑ, аллинчен юн^ тухать. Ним каламасӑрах, кӑмака хыҫӗнчен икӗ кӗпҫеллӗ пӑшал йӑтса тухать.

Ҫ т а п п а н . Мӗн тӑвасшӑн эс ӑна?

М н к и т . Тав тӑвасшӑн!..

Т и м о ш *(чарса)*. Микит, апла ан хӑтлан, хур пӑшална. Эп шутлатӑп та, мӗншӗн, пӑшал персе, ялта шӑв-шав тӑвас? Ман шутпа... Ҫакас ӑна.

Ҫ т а п п а н. Епле?

Т и м о ш. Ана тытма майне пӗлмелле.

Ҫ т а п п а н. Мӗн эсир?.. Мӗншӗн ӑна ҫакмалла?.. Эп хамах... Эп хуса яратӑп ӑна...

Т и м о ш . Хуса яма юрамасть. Килсӗр-ҫуртсӑр, хуҫасӑр йытӑсене пӗтерес пулать. Ҫавӑн пек саккун...

М и к и т. Эп хамах... *(Ураиёнче выртакан вёрене илет те тухса кайма тӑрать.)*

Хирӗҫ У к ҫ и н е кӗрет.

У к ҫ и н е. Тур ҫырлах, Микит, мӗн пулнӑ, ара, сана?.. Кам кун пекех?..

М и к и т. Кам пултӑр, йытӑ... Ҫтаппанӑн. Картишне кӗме ҫук. Ҫакса хуратӑп!.. Халех...

Ҫ т а п п а н. Ҫактармастӑп Тарзана!..

М и к и т . Автана пӑвса пӑрахрӗ, мана тулласа тӑкрӗ. Ыран, акӑ, хӑвӑра пуҫлать. Мӗн калаҫса тӑмалли пур унта!

У к ҫ и н е. Ан хӑтланах ун пек, Микит. Хуса ярӑр, пӗрех хут, ҫакса ан хӑтланӑр, чӗрчун-ҫке вал, шел.

Т и м о ш. Чӑнах, Микит, ан тскӗн... Хуса кӑларса яр та, хӑть шуйттана кайтӑр. Сас-хура ан ту...

М и к и т *(урса кайнӑ тейӗн)*. Ан ӳкӗтлӗр эсир мана. Пӗртен-пӗр шӑлавара ҫурса антарчӗ пулать те... алла ҫыртса ҫурчӗ. Ан ҫулӑхӑр, ан чарӑр мана!..

Тухса кайма тӑрать. Ҫтаппан пырса тытать. **Микит ӑна тӗпелелле** ывӑтса ярать те килкартине тухать. «Ан тӗкӗн йытта, **Микит», тесе,**

ун хыççăн амăшĕ те тухать. Çтаппан вĕсем хыççăн тухса кайма тă-рать. Тимош алăка картлать.

Т и м о ш. Ан тух, Çтаппан шăллăм... Вăл халь урса кайнă, тем туса хума пултарать. Ан тух!

Ç т а п п а н. Ан тĕкĕнĕр! Тивтерместĕп Тарзана!..

Килкартинче йытă йынăшса ярать.

*(Çтаппан хăлхисене хуплать, унтан, урса кайнă пек, кантика рами мĕнĕпех тапса сирпĕтет те чӳречерен сикет.)*

Тимош тĕлĕнсе пăхса тăрса юлать, ванчăк чӳрече патне пырать. Кăшт тăхтасан, М и к и т кĕрет. Аллисене çăвать. Ванчăк чӳречене курать. Мĕн пулса иртнинс тавçăрса илеймест.

М и к и т. Мĕн вăл?

Т и м о ш . Ав, тухса тарчĕ...

М и к и т . Аçта?.. Ухмах!..

Çутă сӳнет.

Ч а р ш а в

## Иккĕмĕш картина

Кăрăç килĕнче — çав кунах. Каç пулнă. Урамра çил шавлать. Хутран-ситрен çиçĕм çиçсе илет. Аслати авăтать. Ç т а п п а н ватса хăварнă чӳречеие утиялпа карса хунă. У к ç и н е пер вĕççĕр чӳречерен пырса пăхать. Пӳртре К ă р ă ç, У к ç и н е, С а н т ă р.

С а н т ă р. Мĕнле ирсĕрлĕх! Йытта çакса вĕлереççĕ. Аçтан хăюлăх çитет?

К ă р ă ç *(Укçинене).* Эс килте пулнă-çке, епле чарман вĕсене?

У к ç и н е. Чарса пăх-ха... Урса кайнă тейĕн... Аçта кайса кĕнĕ, мур ачи? Каç пулчĕ. Вăл çук. Мĕн тума тĕкĕнчĕç-ши йыттине пĕрех хут. Пурăнтăрччим. Юратать Çтаппан чĕрчунсене.

К ă р ă ç. Аçта каять? Мĕн хыпса çунан... Çӳрет те çапкаланса, хырăм выççан таврăнать. Пĕчĕк ача мар. *(Сантара.)* Ну, çул тăвас пирки мĕнле? Хăçан тытăнас тетĕр?

С а н т ă р. Утă çулса пĕтерсенех тытăнатпăр.

Çиçĕм çиçет те, çывăхрах аслати авăтса ярать. Укçине хăй сисмесĕрех сăхсăхса илет.

У к ç и н с. Ой, хоспоти!.. Çывăхрах... *(Турăш çуккине оса илет.)* Турăша илсе хунă, мур ачи. Каларăм ан тĕкĕн

тесе. *(Шырать.)* Аçта амака чиксе хунă вăл ана? *(Турăша кăмака хыçĕнче тупать те хăй вырăнне лартать.)* Ой, хоспоти!

Сантăр. Мĕне кирлĕ вал сана, анне?

Укçине. Çылăха ан кĕр, Сантăр. Чипер пурăннă чух манса каятпăр çав. Акă вал аса илтерет хăй çинчен.

Сантăр. Çапла, аса илтерет... Юлашки кунсенче хĕвел хĕртрĕ. Сывлăшра электричество зарячĕсем нумайланнă. Çавăнпа аташать. Çынсем уйăх çине кайса килеççĕ пулать те, вал — ой, хоспоти!

Укçине. Çылăха ан кĕр. *(Сăхсăхать.)* Çылăха ан кĕр, Сантăр.

Кăрăç. Аслати авăтман, çиçĕм çиçмен чухне аса та илместĕн-çке ун çинчен.

Тэтах çиçĕм çитет. Аçа çапать.

Укçине. Ой, хоспоти!.. Хăратăп эп аслатирен. Ачаранпах хăратăп. Аçта çӳрет-ши ĕнтĕ, ăçта çӳрет ку ача?!

Урамра Çвет Ваньки юрлани илтĕнет: «Жена там по мужу скучает и плачут детишки гурьбой».

Укçине. Свет Ваньки... Каллех ĕçсе лартнă.

Кăрăç. Ĕçсе лартнă... Урăлман. те. Эрнипех ĕнтĕ урăлаймасть.

Укçине. Ашне эрех хурчĕ кĕнĕ тейĕн. Пĕр кун ирттĕрччĕ хăть ĕçменни. Ывăлне шел.

Урамра çутă ялтăртатса илет. Аслати сасси илтĕнмест.

Сантăр *(чуречерен пăхать. Çутă каллех ялтăртатать).* Электричество пралукĕсем вăйлă çилпе пĕрне-пĕри перĕнеççĕ.

Укçине. Мĕн пралукĕ пултăр унта... Çиçĕм çиçет. ^

Кăрăç. Çиçĕм çиççен,- аслати авăтмалла. Кур, авă, хамăр тĕлти юпа çинчех.

Укçине. Хоспоти, тем курса ларăн.

Сантăр. Ванькан юсамалла ăна, Çвет Ванькин... Электрик пулнă май, ялти пĕтĕм электролинисене, тĕрĕслесе, хатĕр тытса тăрас пулать. Сук, ерçеймест пулас-ха. Анатри урамра икĕ эрне ĕнтĕ çутăсăр лараççĕ.

Урамра каллех çутă ялтăртатса илет. Пӳртре çутă сӳнсе ларать.

Кăрăç. Ак тата... ку çитменччĕ.

С а н т ă р. Урама тухса пăхам-ха. *(Тухса каять.)*

К ă р ă ç. Карчăк, лампа илсе кĕр-ха.

У к ç и н е лампа илсе кĕрет.

*(Кăрăç çутать.)* Кунтан шанчăкли çук. Замыкани те пулмасть унăн, пробка та çунса каймасть, ялан стройра. Çук çав, электричество çути хыççăн пăхас та килмест кун сине. Кивелнĕ. Модăран тухнă. Лайăххине час хăнăхатпăр çав.

Аякра хуткупăс сасси илтĕнет.

У к ç и н е. Камсем юрлаççĕ, ара, унта çакăн пек хăрушă каç. *(Чўречерен пăхать.)* Çтаппан мар-и? Çав вĕт... Çтаппа-а-н!..

Ç т а п п а н *(урамра).* Эп Çтаппан мар, ăс-стакан!

К ă р ă ç. Ура çинче аран тăрать...

У к ç и н е. Ой, хоспоти, мĕн пулнă, ара, ăна? Тем курса ларăн.

К ă р ă ç *(кантăкран).* Çтаппан, кĕр пўрте!

У к ç и н е. Такампа вăл, пĕччен мар... Ку тарана çитсе, эрех-сăра тавврашне ăша ярса курман.

В а л я Çтаппана çавăтса кĕрет. Çтаппан самаях ўсĕр. Ура çинче аран тăрать.

В а л я. Укçине аппа, эп мĕн... урамра куртăм та ăна...

К ă р ă ç. Ку тата мĕне пĕлтерет?... Хитре! Мĕн калăн!.. Амăшĕ, кур, савăн ывăлу çине пăхса.

Ç т а п п а н. Шăрш килет...

У к ç и н е. Мĕн шăрши? Аçта?

Ç т а п п а н. Унта... Тин çеç пиççе тухнă çăкăр шăрши.

К ă р ă ç. Мĕн пакăлтатать вăл. Аçта çăкăр шăрши?

Ç т а п п а н. Унта, вĕсем патĕнче.

У к ç и н е. Камсем патĕнче? Аçта, кам ĕçтернĕ сана?-

С т а п п а н. Çынсем... К-курак Хоми.

В а л я. Хомасем патĕнче пулнă вăл. Эп ăна магазинтан тухнине куртăм та... Аран утать,'леççе хăварас терĕм. Микитпа леш, сирĕн пата килни, пурччĕ. Вĕсем магазинах юлчĕç.

К ă р ă ç. Пĕрле ĕçнĕ-им вĕсем?

В а л я. Эп ĕçнине курман. Анчах'Хомасем патĕнчен весем виççĕшĕ те пĕрле тухрĕç. Тата Ванька пурччĕ. Çвет Ваньки.

Ç т а п п а н. Кулăшла... Урамра çил-тăвăл ахăрать, çу-

măр çăвать. а-аçа-ç-çиçĕм. Унта ăшă... Пўртне хутнă, ç-çă-кăр пĕçерсе кăларнă.

Укçине. Мĕн шырама кĕрсе кайнă эсĕ унта, сын патне, чĕнмен çĕре?

Çтаппан. Ч-чĕннĕ!.. Ч-чĕннĕ пире. Х-хăнасем унта... В-варкассинчен килнĕ... Х-хătана...

Укçине. Кам патне?

Çтаппан. Нинук патне... Н-нинука çураçма.

Укçине. Тин çеç çарауран чупса çўретчĕ. Качча тух-малла пулчĕ те-и?

Çтаппан. Ха-хах-ха! Нинука çураçаççĕ... Пĕрле ва-рение Нинука. Эп ăна иихçан та ун пек хитрине курман. Качча тухать. Ха-ха!..

Кăрăç. Вырт, çывăр! Çитет пакăлтатса!..

Çтаппан. Ман çывăрас килмест! Н-нинук качча ту-хать, мана «çывăр». Пĕлессĕр килет пулсан, м-манăн та а-авланас килет. Вăт, акă!.. *'(Кĕсйинчен çур литр «Сто-личнăй» кăларса, сĕтел çине лартать.)* Митрахван патне к-кĕрсе илтĕм... К-кивçен... Ак, Вальăна çураçатпăр. Ва-ля, качча тухатăн-и мана?

Валя. Ой, мĕн калаçать вăл? Намăс... Усĕр вал, ан итлĕр ăна.

Укçине. Салтăн та вырт, çывăр!

Çтаппан. Э-э, ўсĕр мар... Нихçанхинчен те урă! Акă, атте... ç-çураçар, Валяна. Мĕн, н-начар хĕр-им?

Кăрăç *(эрех кĕленчине чўречерен вăркăнтарать).* Ку çитменччĕ тата, чĕчĕ ачи! Туту çинче аннў сĕчĕ типмен! Вырт!..

Çтаплан. Типнĕ... Эсир мана ан кăшкăрăр! Эп... хă-рамастăп, никамран та! Эп сире й-йытă мар! М-мана ви-тене те хупсз лартаймастăр, ç-çакса та х-хураймастăр... *(Макăрать.)* Вăт çапла... Ан кăшкăрăр мана! Çураçма!..

Кăрăç. Кăтартăп сана çураçу!.. Йĕмне антаоса çу-раçса ярсан, ĕмĕр тăршшипе асăнăн! Çывăр, йытă çури, ыран калаçăпăр.

Укçине Çтаппанăн пиншакне хывса'нлет, тепĕр пўлĕме илсе кайса вырттаоать. Кăрăç та унта кĕрсе каять. Валя тухса кайма ĕлкĕрей-мест, Микитпа Тимош тата Свет Ваньки хуткупăспа юрла-сах кĕреççĕ. Пўрте кĕрсен, пĕр çавра юрлаççĕ те чарăнаççĕ.

Тимош *(кĕрсенех, тўрех Вальăна асăрхать).* Ырă каç пултăр. Валюшă!

Валя. Хăвăра та çавăн пек пултăр.

Тимош. Вăт, Микитпа тĕл пулнă ятпа кăштах сав нас терĕмĕр. Ятламăн-и пйре?

Валя. Ман сире ятлама ӑҫтан хӑю ҫитерес.

Тимош. Микит, эпир ҫамрӑк чух туршӑн та пулман ҫакӑн пек хитре хӗрсем. *(Вальӑпа вылями хӗтланса пахать. Ваяя хирӗҫлет.)* Ан хӑра, Валюта, эп сана пиччӳ пек кӑна ачашласшӑн.

Валя. Кирлӗ мар мана ачашлама. Эп пӗчӗк ача мар.

Тимош. Эх, ҫакӑн пек ҫамрӑк та хитре хӗрача юратса пӑрахтӑрччӗ мана, паянах тӗнче хӗрне илсе кайнӑ пулӑттӑм. *(Вальӑна аллинчен тытать.)* Ҫук ҫав, Валюта, эс мана юратас ҫук.

Микит. Тимош, мӗн пакӑлтататӑн?

Валя *(Тимош аллинчен вӗҫерӗнет).* Чипер юлӑр... *(Хӑвӑрт тухса каять.)*

Микит. Мӗн эсӗ унпа? Вӗсем Ҫтаппанпа ҫӳреҫҫӗ, ан чӑрмантар ҫамрӑксене.

Тимош. Эх, Микит, мӗнешкел хӗрача вӑл?.. Пиҫсе ҫитнӗ хӑмла ҫырли. Татса ҫимелли кӑна!.. Ку тарана ҫитсе ман алӑран хӗрсем вӗҫерӗнсе курман-ха. Валюша та манӑн пулать, курӑн ак!

Тепӗр пӳлӗмрен Кӑрӑҫ тухать.

Здрастье, Михал Герасимыч! *(Ал тытаҫҫӗ.)* Палласа илтӗр-и?

Кӑрӑҫ. Улшӑннӑ. Ют ҫӗрте курас пулсан палласа илес те ҫук та, кунта... эс таврӑннӑ тенине илтрӗм...

Тимош. Улшӑнатпӑр ҫав, улшӑнатпӑр, Михал Герасимыч. Ак, эсир те чылаях ватӑлнӑ. Эп тухса кайнӑ чух сирӗн ҫӳҫӳсем те шуралманччӗ. Халь акӑ...

Кӑрӑҫ. Вӑхӑт шӑвать, сисместӗрех. Вӑл пиртен ыйтмасть, пире кӗтмест.

Тимош. Вӑт, яла килсе курас терӗм. Ҫамрӑк чухнехисене аса илтӗмӗр. Микитпа ачаран пӗрле ӳснӗ-ҫке-ха, кӑштах мӗн... Ан ятлӑр эсир пире. Унтан, ак, Ванькапа магазинта тӗл пултӑмӑр. Хурӑнташ-ҫке.

Ванька. Ан ятлӑр эсир мана та, кӳршӗсем. Эпӗ, мӗн... Кӳршӗсем-ҫке.

Укҫине. Килми пултӑн, Ванька. ЁЛӗкрех туха пӗлместӗнччӗ.

Ванька. Вӑхӑт ҫук, Укҫине аппа... А-ан ятлӑр, к-кӑнтӑрла ӗҫре, к-каҫхине...

Укҫине. Мӗн ӗҫӗ пултӑр ӗнтӗ санӑн? Кӑнтӑрла та, каҫхине те ӗҫкӗре.

Ванька. Ара, Тимуша курманни вунтӑватӑ ҫул. Хуранташ-ҫке. Тӗл пултӑмӑр та... пӗрле ӗҫрӗмӗр. Микит, ак, сирӗн.

К ă р ă ç. Пулăç пулăçа аякранах паллать.

В а н ь к а. Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ манăн? Арăм — Лизавета — вилчĕ.

У к ç и н е. Ывăлна ÿстермелле, ак мĕн тумалла.

В а н ь к а, Эх, Лиза, Лиза, Лизавета!.. Ывăлăм ман пĕчĕкскер, Укçкне аппа...

У к ç и н е. Чарăнас пулать ĕçме, Ванька. Капла чăнах пĕтетĕн эсĕ.

В а н ь к а. Чăн сăмах, пĕтетĕп, Укçине аппа, пĕтетĕп. Тĕлĕкре те кашни каçах Лизаветăна кура пуçларăм. Кăчăк туртать. Хăй патне чĕнет пек...

К ă р ă ç. Аташса каятăн капла.

М и к и т. Çитет вĕрентме.

К ă р ă ç. Эс, Микит, выртса çывăр. Эпир, ак, Тимошпа калаçса ларăпăр.

Т и м о ш. Выртса çывăр, Микит.

В а н ь к а. Укçине аппа, ывăлăм ман, Саша, лаша ыйтать.

У к ç и н е. Мĕнле лаша?

В а н ь к а. Вылямалли лаша. Л-лавккана илсе килнĕ. Кивçен пар терĕм те... п-памарĕ М-митрахван. Ш-шанмасть. Л-лизаветăшăн пеней илсенех илсе паратăп-ха та... Амăшĕ çук, ш-шалкă ачана...

К ă р ă ç *(сиввĕн).* Илсе парас пулать çав. Пенсине илетĕн те ĕçсе яратăн.

В а н ь к а. Ан ятлăр эсир мана, ан ятлăр. Кÿршĕсемçке... Каям-ха эппин... ан ятлăр. Тимош, ыран ман пата çитмелле вара.

Т и м о ш. Юрĕ, курăнĕ. Чипер кай.

У к ç и н е. Чипер кай, Ванька.

В а н ь к а тухса каять.

*(Укçине чÿречерен пăхса.)* Çуталать, ав, Лашман вăрманĕ тăрăх кайрĕ: Çумăрĕ те çук, çилĕ анчах. Пăт-пат ÿккелерĕ те иртсе кайрĕ.

Тепĕр пÿлĕмрен Ç т а п п а н тухать.

Ç т а п п а н. А-ăшă... Çăкăр шăрши кĕрет.

У к ç и н е. Выртса çывăр.

Ç т а п п а н. Çивĕтÿсем санăн мĕн тери хитре... в-вăрăм... Юрататăп эпĕ санăн çивĕтÿсене... К-касса пар мана.

Амăшĕ ăна пÿлĕмри диван çине вырттарать.

К ă р ă ç. ЛЛĕншĕн çав таранчченех ĕçтерсе лартнă Çтаппана?

М и к и т. Кам ĕçтернĕ ăна... Хăй: «Мана та ĕçтерĕр», — тесе ыйтсах ĕçрĕ.

Т и м о ш. Эп каларăм ăна ан ĕç тесе. Çук, итлемерĕ.

К ă р ă ç. Ача-пăча, мĕн пĕлет вăл.

М и к и т. Ача-пăча?.. Ха-ха-ха!.. Ачин кăçал Çара каймалла, çапах «ача-пăча».

Т и м о ш. Çтаппан чăнах та çамрăк ĕнтĕ, халех ĕçме пуçласан, ӳлĕмрен мĕн пулĕ. Эпĕ каларăм ан ĕç тесе. Каларăм вĕт, Микит, каларăм...

К ă р ă ç. йыттине тĕкĕнмелле пулман. Пурăнтăр пулатчĕ е хуса ямалла пулнă.

Т и м о ш. Çакасшăн марччĕ эпир ăна... Эп каларăм...

М и к и т. Çитет пустуя пакăлтатса! Ача-пăча мар, ĕçет те, урăлать те.

Т и м о ш. Тен, чăнах та йăнăш пулчĕ пуле, Михал Герасимыч, эсир мĕн... ан ятлăр пире.

К ă р ă ç. Ятлама эсир ĕнтĕ текех пĕчĕк ачасем мар. Хăвăр мĕн хăтланнине пĕлме кирлĕ.

Т и м о ш. Тĕрĕс, Михал Герасимыч, пĕчĕк ачасем мар. Тепĕр чух пире «ăслă çынсем» пĕчĕк ачасем вырăнне хураççĕ, вĕрентме тытăнаççĕ: «Апла ан ту, капла ан ту»,— теççĕ. Манăн ун пек тăвас килмест, кун пек тăвас килег пулсан?..

М и к и т. Парах эсĕ философилле калаçăва, килти пек пул.

К ă р ă ç. Выртса çывăр, Микит.

М и к и т *(чĕрре кĕрсе).* Ман çывăрас килмест пулсан?

К ă р ă ç *(хĕрсе каять).* Каланă сана çывăр тесе!..

М и к и т *(кăшкăрать).* Пурне те хăв пек тутарасшăн! Манăн хам шухăшланă пек пурăнас килет. Вĕрентеççĕ, вĕрентеççĕ...

К ă р ă ç. Куратăп мĕнле пурăннине!

М и к и т. Мĕнех вара? Мĕн?!

Т и м о ш. Микит, аçупа ан хирĕç. Выртса çывăр, ыран ирхине урă пуçпа йĕркеллĕн калаçăпăр.

С а н т ă р васкаса килсе кĕрет.

С а н т ă р. Ванька... Свет Ваньки çилпе татăлса аннă электричество пралукĕ çине пырса тăраннă.

М и к и т. Епле апла?

С а н т ă р. Усерпе кĕрсе кайнă.

У к ç и н е. Ой, хоспоти, халь çеç кунтан тухса кайре.

К ă р ă ç. Больницăна илсе каяс пулать. Машина пат не кайрĕç-и?

С а н т ă р. Кирлĕ мар... Чĕри тапма пăрахрĕ.

К ă р ă ç. Вилсех кайрĕ-и?

У к ç и н е. Эй, инкек, эй, инкек... «Инкек куçа курăн са килмест» тесе ахаль каламаççĕ çав.

С а н т ă р. Ывăлĕ!.. Ывăлĕ мĕнле-ха? Ашшĕсĕр, амă шĕсĕр?!

К ă р ă ç.' Эх, ачамсем, мĕн туса хутăр эсир?

М и к и т. Мĕншĕн эпир?

К ă р ă ç. Пĕрле пулнă-çке эсир...

Ç т а п п а н *(те ыйхă тĕлĕшпе, те çывăрса кайман).* Валя, кала çавсене... эп сана юр-рататăп!..

Пӳртре пуррисем ним калама, ним тума аптраса тăраççĕ.

Ч а р ш а в

## Виççĕмĕш картина

Çуллахи ăшă каç. Кăрăçсен кил умĕ. Виçĕ йăмра ăшă çилпе кашласа ларать. йăмрасем айĕнче пĕрене купи. Перенесем çинче Çтаппанпа, Валя. Çтаппан сăвă вулать. Валя ăна итлет.

Ç т а п п а н.

Эпир санпа тĕл пулнă ятпала
Каçхи тӳпе çут çăлтăрсем сапать.
Курать иккен, сăиать мĕнпур тĕнче,
Телей сунса, сăмахсăр саламлать.
Тархасшăн, тусăм, ним те ан кала:
Сăмах пулса çухалĕç туйăмсем,
Пар çухалсассăн таврăнмĕç вĕсем...
Тархасшăн, тусăм, ним те ан кала*.

Пĕлетĕн-и, кам çырнă çак сăвва?

В а л я . Пĕрремĕш хут илтетĕп.

Ç т а п п а н. Эх, эсĕ те çав! Вăтам шкул пĕтертĕн, çавна та пĕлместĕн.

В а л я . Ку сăвва пире шкулта вĕрентмен.

Ç т а п п а н. Тӳрех курăнать эсĕ поэзине юратманни. Кашни çын чунĕпе поэт пулмалла. Эпĕ поэт мар, сăвăсем çырмастăп. Çапах та манăн ăшра сăвăсем çуралаççĕ. Хирте пыратăн-и, вăрманта-и, улăхра е юханшыв хĕррипе, эп хам ăшра сăвăсем çыратăп. Эп вĕсене хут çине çырмастăп,

* Сăмахĕсем Ю. Сементерĕн.

вěсем манăн *(чěри тěлне кăтартса)* ак çаканта. Вěсем мана пурăнма, савăнма, сывлама пулăшаççě... Эсě, ав, «ку сăвва пире шкулта вěрентмен»... Вěрентменнисене те пěлмелле. .

Валя. Вěçме юрататăн та эсě, Степа.

Çтаппан. Çапла, вěçес килет, Валя. Вěçмесěр мěн пурăнса ирттерен пурнăçа. Ахаль те кěске ěмěре çěр çийěн ăман пек шуса прттерес килмест. Вěçес килет, шуйттан илесшě! Эрешмен пек çип тăрăх мар. Çунатсемпе! Амăрткайăкăнни пек патвар çунатсемпе!..

Тимош, чўречене уçса, вěсем мěн калаçнине итлесе выртать. Вальăпа Çтаппан ăна асăрхамаççě.

Валя. Вěçетěн ак, Степа, вěçетěн. Сан пěтěмпех малалла. Кěркунне Çара тухса каятăн, унтан — вěçевçěсен шкулне, унтан... Унтан уйăх çине, Марс çине, Венера сине... Унтан!.. Çапах та эсě, Степа, çěртен уйрăлса ан кай, пěтетěн... Кўрентěн-им?

Çтаппан. Ак халь эсě кулатăн. Пирěн пек чухне Андриян космоса вěçес пирки шутланă тетěн-и? Пусне те пырса кěмен. Кěнекесенче çыраççě те, театрта кăтартаççě, çуралсанах космоса вěçме ěмěтленнě тесе.

Валя. Чăнах та, шутласан тěлěнсе хытса каймалла. Тепěр темиçе çулт;ан ачаран перле уснě Степа çăлтăрсем сине вěçсе каять, каялла таврăнать. Пěтěм тěнче кěтсе илет. Кавир сарнă çулпа утать... Ой, тыт мана, Степа, ўкетěп! Яла килсе кайăи-и курма? Ун чухне эсě вара аякран та пулин куç хěссе хăвар мана... Кўрентěн-им?

'Çтаппан. Çук.

Валя. Ох, ытла та нумая хапсăнатăн эсě, Степа?

Çтаппан. Хапсăнмастăп эпě. Çавăн пек тăвас килет. Ак, ěнер телевизорпа кăтартрěç, темле кăнтăрти çěршывра кайăк-кěшěк курăнми вěçет, Африкăра тискер кайăксем никамран- хăрамасăр пурăнаççě. Пирěн патăмăрта та çавăн пек тулли-тулли кайăк-кěшěк пултăрччě, чěрчун!.. Мěн тери лайăх пулмалла.

Валя. Ухутник Кавěрле валли-и?

таппан. Çук çав, пулмасть пирěн ун пек. Аманнă кайăка та тепěр хут персе пăрахаççě... е çакса вěлереççě.

Тимош чўречене хупать. Курăнми пулать. Çтаппанпа Валя пěр хушă чснмеççě.

Çтаппан. Утă çулса пěтеретпěр, часах вырма тухас РУлать. Шăпчăксем те юрламаççě, куккук та авăтмасть.

Валя. Часах кер çывхаре. Çулçăсем сарăлма пуçлĕç. *(Чĕнмеççĕ.)* Сирĕн патăрта пурăнаканскер, Тимош ятлă-и-ха çав, мĕнлескер вăл?

Çтаппан. Аçтан пĕлен çынна. Нумай та пурăнмасть пирĕн патăрта. Йĕркеллех пек.

Валя. Сана килĕшет-и вăл?

Çтаппан. Хĕрача-им вăл мана килĕшме? Тен, зсĕ килĕштерсе пăрахмарăн-и таçта?

Валя *(шӳтлесе).* Пулма та пултарать. Пыратьскер вăл... К.ХИ-И-ИК кулăшласкер... Çепĕççĕн калаçать хăй.

Çтаппан. Мĕн çинчен калаçрăр эсир унпа?

Валя. Мана пĕрле илсе каяс тет.

Çтаппан. Аçта?

Валя. Тĕнче курма. «Çакăн пек çамрăк, хитре хĕрача юратса пăрахтăрччĕ мана, ыранах тĕнче хĕрне илсе кайнă пулăттăм», •— тет.

Çтаппан. Ну, килĕшрĕн-и?

Валя. Халлĕхе çук.

Çтаппан. Ытла та айван эсир, хĕрачасем!.. Пĕрремĕш хут тĕл пулаççĕ те çынна тĕнче хĕрне тухса кайма хатĕр.

Валя *(юри тарăхтарса).* Мĕншĕн каяс мар, хăть тĕнче курса çӳретĕп пĕрре.

Çтаппан. йĕкĕлтетĕн?.. Виçĕ кун урама тухмарă Мĕн туса лартăн килте?

Валя. Май ывăл пур. Анне ял Советĕнче каçхи дежурствăра. Кампа хăварас ăна?

Çтаппан. Мĕнле ывăл?

Валя. Çаплах, ывăл... пĕчĕкскер, лайăхскер.

Çтаппан. Эс манпа ан шӳтле. Кала, мĕн шухăшласа кăлартăн тата?

Валя. Хăраса ӳкрĕн-им? Çвет Ваньки ывăлне вăхăтлăха хамăр патăра илтĕмĕр-çке...

Çтаппан. Фу-у... Эп мĕн тесе... тем тесе...

Валя. Ухмах эсĕ, Степа. Александр Михалч ăна ача çуртне вырнаçтарасшăн. Эп хамăр патра яланлăхах хăварасшăн. Анчах та анне килĕшесшĕн мар.

Çтаппан. Мĕнле хăвăр патăртах?

Валя. Ну, хамăр ача пултăр. Иккĕн кăна пурăнатпăр, кичем пире.

Çтаппан. Эсĕ мĕн, вунтăххăртах ачаллă пулса ларасшăн-и? Сантăр ача çуртне вырнаçтарасшăн пулсан вырнаçтартăр.

Валя. Ну, вăл чăн-чăн пирĕн ача пулмасть-çке-ха.

Ç т а п п а н. Епле чăн-чăн ача мар? Пукане-им вал? Çынсем мĕн калĕç?

В а л я. Мĕн калĕç?

Ç т а п п а н. Тем те калĕç... Пĕр сăмахпа, ун пек тăватăн пулсан, эп санпа тел пулма пăрахатăп.

В а л я. Мĕскер? Мĕскер?

Ç т а п п а н. Мĕн тума кирлĕ вал сана? Эс вара кунĕн-çĕрĕн ун патĕнче ларма пуçлăн. Ман çинчен те маиса кайăн.

В а л я *(шутлесе)*. Паллах. Ывăл пулсан, мĕн тăвас-ха санпа. Ман ывăл пулать, Степа, ăнлантăн-и эсĕ, ывăл!.. Мĕнлескер вăл, курасчĕ санăн...

Ç т а п п а н. Пит кирлĕ... Хăв мĕнле тăвас тенĕ, çапла ту. *(Тăрса утать.)*

В а л я. Эх, айван, айван... Мĕн ăнланăн-ши эсĕ. Тăхта-ха!.. *(Çтаппан хыççăн утать.)*

Пӳртрен Т и м о ш тухать. «Имел бы я златые горы и реки, полные вина», — тесе юрлакаласа, перенесем сине пырса ларать.

Т и м о ш. Хуçасем пери те килте çук. Киче-е-ем! Хăть кашкăрла ӳле. Çавах та пурнăç мар кунта. Мĕнле кăна тӳссе пурăнаççĕ. Эх, укçа шăтăкне тупасчĕ, тăпăлтарса кăларăттăм та пĕр ывăç вара тухса шунă пулăттăм.

Урампа Микит килет, хăй салхуллă.

Аçта çӳретĕн эсĕ, киле те килсе çакланмастăн?

М и к и т. Епле-ха эсĕ- манса кайнă?

Т и м о ш. Мене?

М и к и т. Пытарма та пулин пымаллаччĕ. Перле пултăмăр-çке вăл каç.

Т и м о ш. Юратмастăп эпĕ вилнĕ çынсене. Вилнĕ сын вăл вилĕм çинчен аса илтерет. Ман халь пурнас килет. Ох, пурăнас килет! Çĕр çул, май килсен, икçĕр çул! Пурнас вăл мĕнлерех, шутласа пăх-ха... Йĕри-тавра тин çурăлнă чечек пек хитре хĕрачасем. Эпир санпа ватăлатпăр. Пурăнса курмасăрах ватăлатпăр. Шел мар-им-ха? Э?..

М и к и т. Мĕнле пулса тухрĕ-ха?.. Йĕркеллех тухса кайпĕ-çке вăл пирĕн патăртан?

Т и м о ш. Кам?

М и к и т. Эпир те айăплă. Ĕçтерсе лартрăмăр. Усĕрскер, пырса тăрăннă вăл электропралук çине.

Т и м о ш. Тьфу! Пуçларĕ çук çын çинчен калаçма. Эп пурнăç çинчен калаçатăп, вăл пур — тамăкпа çăтмах Çинчен.

Микит. Ывăлне курасчĕ санăн... Пĕчĕкскер, сăмса шывне юхтарса тăрать.

Тимош. Йĕрет-им?

Микит. Мĕн йĕме пĕлтĕр вăл, пĕчĕкскер.

Тимош. Темех мар, пăхса ӳстерĕççĕ. Капитализм çĕршывĕнче пурăнмастпăр... Çавăншăн пуçна усрăн-и? Пуриншĕн кулянса хуйхăрас пулсан ан та пурăн çут тĕнчере.

Микит. Мĕншĕн пымарăн, Тимош?

Тимош. Вăт, çыпçăнчĕ!.. Каларăм-çке эп сана. Вăл мар-ха кунта, Микит, кичемлĕх пусса илет. Мĕнле тӳссе пурăнатăн эсĕ кунта виçĕ уйăх ытла?

Микит. Эпĕ виçĕ уйăх кăна пурăнмастăп. Ачаранах... Кунта çуралса, кунта ӳснĕ.

Тимош. Мана акă виçĕ кун пурăнсах йăлăхтарса çитерчĕ.

Микит. Эс хăнăхман ялти пурнăçа.

Тимош. Лавкка уçăччĕ-и унта?

Микит. Хупă.

Тимош. Ну, атя, килне каятпăр, Митрофан патне.

Микит. Халь мар, Тимош, пултараймастăп. Ванька ывăлĕ асран тухмасть. Ак çакăнта, ăшра, тем татăлса каина пек туйăнать. Тем çитмест, хам та пĕлместĕп. *(Пуртелле кĕме тăрать.)*

Тимош. Тăхта, ăçта васкатăн? Çывăрма ĕлкĕрĕн-ха. Ларар кăштах уçă сывлăшпа сывласа. *(Пирус парать.)* Туртса ярас... *(Пĕр хушă чĕнмеççĕ. Каç шăплăхне итлеççĕ.)* Мĕнешкел шăплăх. Ниçта пĕр сас-хура илтĕнмест. Аçта хĕсĕнсе пĕтнĕ ялти яш-кĕрĕм? Астăватăн-и, Микит, эпир ача-пăча чухне çур çĕрччен, тул çути киличчен юрă-.ташă илтĕнсе тăратчĕ. Аçта хальхи çамрăксем? Мĕн тăваççĕ, мĕн интереслентерет вĕсене?..

Микит.

Пĕр шăпчăк çеç сад пахчинче
Пур тĕнчене илтмелле шăрататъ юррине.

Тимош. Çук ĕнтĕ, шăпчăксем юрланă вăхăтсем иртсе кайрĕç. Часах çăхансем кранклатма тытăнаççĕ. Юрататăп çăхансене, ăмсанатăп! Мĕнешкел мăн кăмăллă кайăксем! Миçе çул пурăнаççĕ вĕсем, пĕлетĕн-и?.. Икçĕр çула яхăн! Вăт, çавăн чухлĕ пурăнасчĕ!..

Микит. Хамăра панă ĕмĕре йĕркеллĕ пурăнса иртерсен те юрать...

Тимош *(тĕттĕмре тем асăрхать.)* Камсем çавсем, хурăн çумĕнче тăракансем?

Микит. Çтаппанпа Валя мана хирĕç пулчĕç, çавсем пуле.

Тимош. Тин кăна çакăнта ларатчĕç... Мĕн, вĕсем чанах та пĕрне-пĕри юратаççĕ-и?

Микит. Аçта пĕлсе пĕтерен çамрăксене. Тĕл пулаççĕ пĕр-пĕринпе. Çтаппапăн кăçал Çара каймалла. Вăл кайса киличчен халь тем те пуле.

Тимош. Итле-ха, Микит, илсе кай Çтаппана ăçта та пулин Вальăран уйăрса. Ман унпа калаçмалли пур.

Микит. Мĕн шухăшласа кăлартăн тата?

Тимош. Ан хăра, тĕкĕнместĕп эп ăна... Ним тума аптранă енне шӳтлесе пăхар, кичем мана...

Микит. Çамрăк вал халь, ан çавăр ун пуçне... Ан тив, çӳреччĕр Çтаппанпа.

Тимош *(лăпкăн).* Ый-та-тăп... Санăн эп ыйтнине тивĕçтермелле-и е çук-и?.. Эп саншăн хама хĕрхенмен.

Микит чĕнмест.

Каларăм-çке, тĕкĕнместĕп эп ăна. Калаçмалли пур.

Урампа хăвăрт Валя утса пырать. Ун хыççăн — Çтаппан.

Çтаппан. Ну, тăхта ĕнтĕ, Валя, ăнлан эс мана!..

Валя. Эс мана ăнланас çук, Çтаппан. Çавăн пек кирлĕ-çке. Эпĕ ун пирки татăклах шухăшланă.

Тимош. Ырă каç пултăр, мăшăр кăвакарчăн!..

Валя. Ырă каç. *(Çепĕççĕн.)* Уçă сывлăшпа сывлатăр-и е çамрăк вăхăтсене аса илетĕр-и?

Микит. Аплах каласа ан кӳрентерĕр ĕнтĕ, Валя.

Тимош. Çав териех ватă-им вара эпир?

Валя. Ватти ватах мар та, çамрăках та мар. А-а, тепĕр тесен, çамрăксенчен мĕн усси.

Тимош. Вăт, кăна вара ăслă каларăн, Валюша. Килсе лар пирĕнпе, ваттисемпе. Эпир хăть пурнăç тути-масине курнă çынсем. Ана-кăна ăнланатпăр.

Валя. Чăнах, ларсан та юрать. *(Пĕрене çине пырса ларать.)*

Тимош, Çтаппана илсе кайма хĕтĕртсе, Микита аякран тĕкет, хăлхаран тем пăшăлтатать.

Мĕн эсир хĕрачасем пек пăшăлтататăр? Тăвату çын хушшинче вăрттăнлăх çук, теççĕ.

Тимош. Хамăр хушăри калаçу.

Çтаппан тарăхнă. Пӳрте кĕме тăрать.

Микит. Çтаппан, эс курман-и, Чăрăшкассинчи Володька пиччĕшĕ хуларан тепĕр йытă илсе килнĕ, Тарзанран та пысăкскер. Кирлĕ мар-и?

Çт.аппан. Мĕн тăвас ман унпа? Пĕрне çакса вĕлернĕ, çитет...

Микит. Кирлĕ мар апла? *(Çтаппан чĕнмест.)* Да-а, чутах манса кайман... Володькин ыран Çара тухса каймалла, эс илтмен-и?

Çтаппан. Паян курнă эп ăна, шарламарĕ-çке.

Микит. Эпĕ тин кăна куртăм. Санпа питĕ курса калаçасшăнччĕ вал... Кайса кил.

Çтаппан. Ыранах терĕ-и?

Микит. Пĕрремĕш автобуспах ларса каятăп терĕ.

Çтаппан хапха умĕнче таракан велосипеда илет.

Пĕрле каййăпăр-и?

Çтаиппан. Пĕчченех. Эп самантрах кайса килетĕп унта. *(Хăй çаплах каймасть-ха. Вальăна кунта хăварас килменни сисĕнет.)* Атя пĕрле, лартса каятăп.

Валя. Вĕçтерех. Ларам-ха кăштах «ватă çынсемпе».

Çтаппан. Ну, ларах... *(Велосипед сине ларса, хăейрт тухса каять.)*

Тимош. Кĕвĕçет.

Микит. Ну, ман кĕрсе çывăрас. Эсир ларăр, çамрăксем. *(Пӳрте кĕрсе каять.)*

Валя. Манăн та килелле каяс. *(Ура çине тăрать.)*

Тимош. Аçта васкатăн? Ларар кăштах. Ак, Степа киличчен ларатпăр та калаçса, кайран эпĕ çывăрма кĕрĕп, эсип пĕрле юлатăр.

Валя. Мĕн çинчен калаçăпăр-ха эпир сирĕнпе?

Тимош. Ну, сахал-им калаçмалли, тем çинчен те... Мĕн, сирĕн Степăпа калаçу çыпçăнсах каймасть-им?

Валя. Вăт, шухăшлăр-ха эсир, Тимош... Эпĕ Свет Ванькин ывăлне илесшĕн усрама. Çтаппан унпа килĕшессшĕн мар. Ниепле те пĕр сăмах тупаймастпăр. Эсир мĕнле шутлатăр?

Тимош. Ку ĕнтĕ, паллах, пĕр енчен, ырă ĕç туни пулать. Ну, тепĕр енчен, эпĕ те ун пек тума хушман пулăттăм. Эсĕ халь çамрăк, сан хăвăн пурнăç малалла.

Валя. Эсир те çавăн пек шутлатăр-и?.. Степа курение те халь манпа калаçасшăн та мар.

Тимош. Эх, эсир те çав, хĕрачасем, каччăсен пуçне çавăрма пĕлместĕр. Эс акă мĕн ту, Валя... Манпа çӳренĕ пек ту, чуптăвам пек ту. Кĕвĕçме пуçлать, ниçта кайса кĕреймĕ.

Пĕр хушă чĕнмеççĕ.

Валя. Хм, çăлтăр ӳкрĕ...

Тимош. Ман çăлтăр хăшĕ, пĕлетĕн-и?

Валя. Ав, çавă, чи çутти-и?

Тимош. Çук... Манăн тӳпере çăлтăр çук, çĕр çинче кăна. *(Вальăна)* Пĕртен-пĕр çăлтăрăм — эсĕ...

Валя. Ун пек ан калăр. Вăтантаратăр мана...

Чĕнмеççĕ.

Эсир Микитăн юлташĕ-им?

Тимош. Юлташĕ кăна мар, чи çывăх тусĕ. Тата эпĕ вĕсемпе хурăнташлă.

Валя. Эп сирĕн Хурамапуçне качча тухнă аппăра паллатăп. Арçук Хветуçне.

Тимош. Çапла-а, саланса пĕтрĕмĕр эпир тĕнче тăрăх йăвари кайăк чĕпписем пек. *(Вальăпа юнашар пырса ларать, унăн аллине тытать.)* Ан хăра манран, эп усал çын мар.

Валя ура çине тăрать.

Валя, эпĕ усал çын мар иккенне ĕненетĕн-и эсĕ?.. Ĕненетĕн пулсан, лар манпа юнашар. Эп сана хамăн пурнăç çинчен каласа парăп.

Валя. Калăр, Тимош, эп тăрса та итлетĕп.

Тимош. Эп санпа чуна уçса калаçасшăн, эс ютшăнан. Мĕнешкел каç!.. Çиçĕм те çиçмест, аслати те авăтмасть. Пĕлетĕн-и, Валя, çил-тăвăллă, аçа-çиçĕмлĕ каççене юрататăп эпĕ. Çиçĕм çиçтĕр, аçа çаптăр, пĕтĕм тĕнче кисренсе тăтăр! Эсĕ витререн тăкнă пек çăвакан çумăр айĕнче çара пуçăн, çарамасăн, нимрен хăрамасăр, этем ирĕкне пăхăнман вăя çĕнтерсе, алăсене çӳлелле кăнтарса тăратăн. Пĕр вĕççĕр çиçĕм çиçет, аçа çапать. Эс çаплах тăратăн... çаплах тăратăн, вăй çитнĕ таран ахăратăн... Вăт, мĕнешкел!..

Валя. Хăрушă та мар-и?

Тимош. Камран, мĕнрен хăрушă пултăр, эс хăвна çутçанталăкран та вăйлăрах туятăн пулсан...

Валя. Ав мĕнле сын эсир, Тимош?..

Тимош. Мĕнле?

Валя. Вăйлă... Нимрен те хăрамастăр.

Тимош. Ку тĕнчере хăрама кирлĕ мар. Хăрасан пĕтереççĕ, таптаççĕ, пылчăк ăшне... *(Сасартăк.)* Кичем мар-и сана ялта пурăнма?

В а л я. Мĕншĕн кичем пултăр? Халĕ ĕнтĕ кичем мар Хуларан та çамрăксем каялла, яла, килме пуçларĕç. Пурте мар, паллах...

Т и м о ш. Ан кала мана, Валя, кичем кунта сирĕн. Пĕлетĕп: сана та кичем. Ялтан тухса курман-ха эсĕ, саванпа саншăн ял çăтмах пекех туйăнать. Пĕрер çул тĕнче тарах çӳресе кур-ха, яла пырса кĕрес килми пулать.

В а л я. Пĕлместĕп çав, эп тĕнче тăрăх çӳремен. Шупашкартан ытла ниçта та кайса курман.

Т и м о ш. Итле-ха, Валя! Каяс килет-и санăн кунтан? Атя манпала? Каяр, Валя! Эп сана Мускава илсе кайса кăтартăп. Мĕнле урамсем унта, çӳллĕ çуртсем! Пăхсан, çĕлĕк ӳкмелле! Магазинсем, ресторансем, шуйттан та пĕлсе пĕтерес çук. Пыратăн-и пĕрле, Валя?

В а л я. Пĕлместĕп... Мĕнле эп сире тăруках калам-ха, тата мĕнле сăлтавпа тухса каяс манăн сирĕнпе?

Т и м о ш. Ан хăра, Валя, эп сана нимле усал та тăвас çук. Курса çӳреме кăна илсе каятăп. Тĕнче кăтартса çӲрĕп.

В а л я. Пĕлместĕп, Тимош, пуçа çавăрмаллах калатăр эсир...

Т и м о ш. Эп сана кунта килнĕренпе икĕ хутчен курнă... Микитсем патĕнче... Икĕ хутĕнче те Микитсем патĕнче. Паян, ак, виççĕмĕш хут куратăп. Вунтăватă çул хушшинче ăçта кăна çитсе курмарăм пуле, сан пек хĕрача тел пулман.

В а л я. Ун пек ан калăр, Тимош, вăтантаратăр. Ман пеккисем кăна пур-и тĕнчере...

Т и м о ш. Тĕнчипе те çук сан пекки, Валя! Эп сана тинĕс хĕррине илсе кайăп... Мĕнешкел хитре унта! Иçĕм çырли пахчисем. *(Вальăна ыталать, леш хирĕçлет.)*

В а л я. Мĕн эсир, Тимош? Кирлĕ мар ун пек, кирлĕ мар...

Т и м о ш. Ан хăра манран, Валя... Эп сана перле илсе кайăп. Мĕнешкел хитре унта! Сан тавра груша ӳсет, турат тулли апельсин, виноград! Каятпăр, Валюша! Эс мана юрататăн пуль тетĕп эпĕ... Э? Юрататăн-и? Кала, Валюша, юрататăн-и? Ну, савнă чунăм, кала...

В а л я. Кирлĕ мар... Ун пек сăмахсем ан калăр мана. Вĕçертĕр. Ман киле каяс пулать.

Т и м о ш. Эп сана киле хам ăсатса ярăп.

В а л я. Çук, эпĕ пĕчченех каятăп.

Т и м о ш *(çурт умĕнчен аяккалла, тĕттĕм çĕрелле сĕтĕрет).* Ан хăра, Валя... ан хăра, тĕкĕнместĕп эп сана...

В а л я. Мĕн эсир, чăнах... чарăнăр! Аçта сĕтĕретĕр...

Тимош Вальăна аллисем çине йăтать те тĕттĕмелле илсе каять.

Пулăшă-ă-ăр!

Çак хушăра Çтаппан велосипедпа çутатса килни курăнать. Валя кăшкăрнине илтсе, тӳрех унта чупать. Çтаппана курсан, Тимош Вальăна вĕçертет.

Валя. Степа, çăл мана тархасшăн, çăл! Хăрушă çын вăл!..

Çтаппан. Микит ăçта?

Валя. Пӳрте кĕчĕ.

Çтаппан *(мĕн вăй çитнĕ таран кăшкăрать.)* Микит! Мики-ит! Мики-и-ит!

Микит *(чӳречерен пăхать.)* Эс, мĕн, ухмаха ертĕним? Çынсене вăрататăн...

Çтаппан. Вăранччăр! Пурте вăранччăр! Пĕтĕм тĕнче вăрантăр!!!

Микит. Мĕн эс... Мĕн пулнă сана?

Çтаппан. Тух урама... Тух!

Микит чӳречене хупать те урама тухать.

Микит. Мĕн кăшкăран?

Çтаппан. Ултавçă! Эс мĕншĕн мана Чăрăшкассине улталаса ятăн? А-а? Мĕншĕн, «юратнă» пиччеçĕм? Çак путсĕр ман хĕртен мăшкăллатăр тесе-и?

Тимош. Ну, эс вара кăна мĕн... Степа... шутламасăр калаçатăн. Эп ăна тĕкĕнес тесе мар. Шӳтлесе кăна.

Çтаппан. Шӳтлесе?! *(Тимоша кăкăртан ярса илет.)* Шӳтлесе-и?..

Тимош. А-ну, ан çулăх, анчăк çури.

Çтаппана тапса ывăтса ярать.

Валя. Ан çыхлан, Степа, вĕлерет вăл сана, хăрушă çын вăл...

Çак вăхăтра Кăрăç аялти кĕпе-йĕмĕпех крыльца çине тухать, мĕн пулса иртнине сăнать.

Çтаппаи. Эс кай! Кай киле!.. Кай теççĕ!..

Валя чупса тухса каять.

Эп кунта вĕсемпе хамах... *(Микит патне пырать.)* Эс мĕншĕн мана улталаса ятăн? Володька пиччĕшĕ килмен,

нимле йытă та илсе килмен... Володькăн та Çара каймалла мар. Мĕншĕн улталарăн? Э? Мĕншĕн, пичче? Çак путсĕр мăшкăлĕ пулма-и? *(Микита хăлха чиккинчен çапса ярать.)*

Микит тарăхнипе Çтаппанă çапса ярать. Пуçланса каять çапăçу. Укçине пўртрен тухать.

М и к и т. А-а, эс апла-и?
К ă р ă ç. Чарăнăр!..

Хĕрсе кайнăскерсем ниепле те чарăнаймаççĕ.

Чарăнăр, тетĕп!

Укçине çапăçакансен хушшине кĕрсе тăрать.

У к ç и н е. Ой, хоспоти, тем курса ларăн ку ачасемпе. Ара, Микит, Çтаппан, мĕн пулнă сире, яла култаратăр-çке капла. Пĕртăвансем — ют автансем пек çапăçатăр. Чаранар!

Кăрăç пурне те вĕренпе çунтарма пуçлать. Çапăçакансем уйрăлса каяççĕ, анчах пĕри те лăпланаймаççĕ. Микитпа Тимош урамра калламалла утса çўреççĕ. Çтаппан пĕрене пуçĕ çине ларать те сасăпах йĕрсе ярать.

Ç т а п п а н. Ултавçă!.. Улта-ав-çă-ă!..
М и к и т. Каçар, шăллăм. Эп ун пек тăвас тесе шутламан.
У к ç и н е. Турăçăм, намăсран та хăрамастăр-çке эсир? Ялйыш, кўршĕсем мĕн тейĕç.
К ă р ă ç. Камсем эсир, Микит, Тимош?.. Мĕн кирлĕ сире?.. Тăвата çула яхăн фронтра çапăçрăм. Çынçиен фашистсемпе куçа-куçăн та тĕл пулнă. Аçта пынă унта вĕсем хыççăн кĕл те виле купи тăрса юлатчĕ... Вĕсем хăть этемсем пулман... Эсир... эсир этемсем-çке! Мĕншĕн-ха сирĕн хыççăн ăçта ура пусатăр, çавăнта йĕрĕнчĕк вырăн юлать? Мĕншĕн?! Эх, ывăлăмсем, ывăлăмсем. Çакăн пек намăс кăтартма çуратса янă-ши эпир сире?.. Тухса кайăр ялтан! Урăх сире тўсме хал çитмест!.. Тухса кайăр!

Ч а р ш а в

## ИККЁМЁШ ПАЙЁ

### Тăваттăмĕш картина

Ял Совет председателей пӳлĕмĕ. Пӳлĕмре ытлашши япала çук. Эпир курма хăнăхнă «Т» саспалли евĕр симĕс пустав витнĕ сĕтелсем те çук. Пӳлĕм варринче çаврака сĕтел. Стена çинче Ленин сăнĕ. Аçта пăхнă унта пӳлĕмри чечексем. Пăхсанах, председатель пӳлĕмĕ мар, тасалăха юратакан хуçа хваттерĕ тейĕн. Сантăр телефонпа калаçать.

Сантăр. Паянаух-и? Юрать, хатĕрлĕпĕр... Хăвăрăн машина килет-и?.. Юрĕ...

Митрахван кĕрет.

Хулана пынă чух çула май хамăр та илсе пымаллаччĕ. Ну, енчен те хăвăрăн машина кунта килмелле пулсан... лартса каятăр. Хатĕрлĕпĕр... *(трубкăна хурать.)* Мда-а, ĕçсем...

Митрахван. Сывлăх сунатăп, Александр Михалч!

Сантăр. Здравствуй, Митрофан Иваныч!

Митрахван. Тем пулман пулĕ-çке, Александр Михалч?

Сантăр. Çук... темех пулман та... Ачана илсе каяççĕ.

Митрахван. Мĕнле ачана?

Сантăр. Свет Ваньки ачине... ача çуртне.

Митрахван. Унта ăна луччĕ пулать.

Сантăр. «Луччĕ»... Ашшĕ-амăшĕсĕр кирек ăçта. та лайăх пулас çук... Ну, мĕнле пурăнатăн, мĕнле ĕçлетĕн?

Митрахван. Кăна ёнтĕ, мĕнле калас... енчен те план тултарнине... 120 процент план тултарнине шута илсен... Кашни уйăхрах преми илетĕп.

Саитăр. Камсем унта тул çутăлнă-çутăлманах лавкка умĕнче кĕпĕрленсе тăраççĕ? Мĕн кирлĕ вĕсене ирех? Çăкăр-тăвар-и, премĕк-и е пылак шыв?

Митрахван. Пирĕн ялсем мар вĕсем. Хурамапуçĕнчен килнĕ.

Сантăр. Эрех патне?

Митрахван. Эрех патне, Александр Михалч.

Сантăр. Акă мĕнле план тултаратăн эсĕ. Акă ăçта вăл санăн 120 процент.

Митрахван. Манăн халăх ыйтнине тивĕçтермелле. Эпĕ ăна-кăна пĕлместĕп. Мана суту-илӳ тума вĕрентнĕ, план тултарма. Ытти пирки аслисем шутлаччăр. Çавăншăн вĕсем пысăк укçа илеççĕ. Мое дело — хуткупăс, туртсан та нарт! тет, тёртсен те нарт! тет. Хăйсен укçипе ĕçеççĕ, манăннипе мар.

Сантăр. Сана мĕншĕн хулпуççи çине пуç лартса пана?.. Иртнĕ ял Совет ларăвĕнчех асăрхаттарнăччĕ, парах çĕр хута эрех пама!

Митрахван. Ыйтаççĕ-çке. Ак, ĕнер те, хăвăр Микитпа Тимош пычĕç те... Мĕнле чарăн-ха?

Сайтар. Хăть шуйттан пытăр, ан пар! Эрех эмел мар, ĕçмесен вилмеççĕ ирччен. Çын чирлесе ӳксен, çĕр хута эмел тупаймăн. Фельдшăр Хветри каять тетним çурçĕр тĕлĕнче аптекăна? Каймасть. Сан вара яланах алăк уçă. Малашне çапла тăватăн: хулари пек, ирхине вунă сехетре сутма пуçлатăн... лавкка хупиччен. Урăх вăхăтра сутнă тенине илтсен, мана ан айăпла. Лавкка уççисене сĕтел çине кăларса хуратăн!

Митрахван. Районтан план ыйтаççĕ. Кунта — сутма юрамасть. Пит кирлĕ мана. Виçĕ çул ĕçлерĕм техникум хыççăн. Çитет. Тăрантăм. Тухатăп та таратăп.

Сантăр. Аçта?

Митрахван. Каяс тесен, таçта та кайма пулать. *(Хут кăларса парать.)* Акă, чĕнеççĕ.

Сантăр *(вулать.)* Та-а-ак... Апла, артист пулас тетĕн-ха?

Митрахван. Шупашкарта лайăх сасăллисене артист пулма пухаççĕ. *(Хутне каялла илет.)* Чĕнсе янă.

Сантăр. Сан мĕн, сас лайăх-им?

Митрахван. Иртнĕ çул районти смотрта грамота илтĕм. Культура пайĕн заведующийĕ те мухтарĕ. Юрий Никулин сăнлă терĕ. Эсир ман сасса итлесе пăхăр-ха, Александр Михалч.

Саитăр. Мĕнех, итлесе пăхар... Тавай, юрла!

Митрахван темиçе хутчен ӳсĕркелесе илет. Унтан, паллă юрăç пек тăрса, «Варяг» юрă юрлама пуçлать. Пĕр куплет юрласан, Сантăр ăна чарать.

Та-ак, юрать. Тата мĕн пĕлетĕн?

Митрахван. Чăвашла-и, вырăсла-и?

Сантăр. Пурпĕрех.

Митрахван. Чăвашлинче — шарт! тутарать.

Сантăр. Мĕн, шарт! тутарать?

Митрахван. Юрă пур çавăн пекки. Мефодий Денисов юрлать.

Сантăр. Ну, ну, тавай шарт! тутар-ха эппин. Итлем.

Митрахван «Хĕл илемĕ» юрăран пĕр куплетне юрлать те иккӗмӗш куплетри сăмахсене аса илеймесĕр чăрăнать.

Митрахван. Вăт...

Сантăр. Мĕн, «вăт»?

Митрахван. Шарт! тутарать.

Сантăр. Та-а-ак... Пĕр-пĕр оперăран ари юрлама пĕлетĕн-и?

Митрахван. Çук. Оперăсене юрлама пĕлместĕп.

Сантăр. Та-ак, сассу пырать. Аван юрлан. Анчах Мефодий Денисов пулмасть санран. Юрамасть сана халлĕхе артист пулма. Илмеççĕ. Ял ятне ярса ан çӳре. Япăх артист пуличчен лайăх суту-илӳçĕ пул. Сумлăрах. Вăт çапла.

Митрахван. Чĕнсе янă-çке-ха.

Сантăр. Ку вăл чĕнсе яни мар. Кунта эс хăв çырса янă çыру çине ответ панă: «Сассăра тĕрĕслеттерме килĕр», — тенĕ. Ну, эпĕ ак тĕрĕслерĕм. Тухмасть санран артист. Лавккарах ĕçле. Унта та пире пĕлекен çынсем кирлĕ. Сана патшалăх суту-илӳре ĕçлеме вĕрентсе кăларнă, артист пулма мар. Каçсерен клубра художество пултарулăх кружокĕнче шарт! тутарăн. Талант пуррине кăтартсан, Шупашкара музыка театрне хамах леçсе хăваратăп. Унта манăн паллакан пур. Эп каласан илет. Вăт çапла. Пар аллуна!

Митрахван кăмăлсăррăн алă парать те кайма тăрать.

Эп каланине манса ан кай, асту. Вырма тухсан, ӳсĕр çӳрекенсене курсан, вĕсемпе пĕрле эсĕ те ответ тытатăн. Анлантăн-и?

Митрахван чĕнмест. Кăмăлсăррăн тухса каять. Микитпа Тимош кĕреççĕ. Микит чĕнмест. Тимош юри именчĕклĕн, йăвашшăн калаçнă пек тăвать.

Тимош. Кĕме те юратчĕ, Александр Михалч?

Сайтар. А-а, ирĕкри ăмăрткайăксем!.. Иртĕр, иртĕр, тархасшăн.

Тимош. Иртсех тăмалла-и?

Сантăр. Аçта аплах васкатăр? Ларăр кăштах.

Тимош. Туртма юрать-и?

Сантăр. Туртăр... Эп хам ĕç пӳлĕмĕнче туртмастăп. Ну, килнĕ çынсене чарман. *(Вирус кăларса парать.)* Тархасшăн.

Тимош. Мĕн тесе çырнă унта? Ниепле те вулаймастăп. Ют патшалăх чĕлхипе çырнă.

Сантăр. Шпандер.

Тимош. Мĕн?

С а н т ă р. Шпандер. Çавăн пек фирма пур Германинче.

Т и м о ш. М-да-а, тĕлĕнмелле килсе тухать иккен ку пурнăç. Вăтăр çул каялла вĕсем пире валли бомбăсем туна, халь, ав, •— сигарет.

С а н т ă р. Ну, мĕнле пурăнатăр?

Т и м о ш. Чаплах мар, Александр Михалч.

С а н т ă р. Мĕн апла?

Т и м о ш. Ăслă çынсем нумайланса кайрĕç. Ухмахсене пурăнма йывăр. Хĕсĕрлеççĕ.

С а н т ă р. Мĕнле пурăнас тетĕр-ха эсир малашне?

М и к и т. Эс пирĕншĕн ан пăшăрхан. Пурăнкалăпăр.

Т и м о ш. Чăнах та, кирлĕ мар пирĕншĕн пăшăрханма. Эпир сирĕн çынсем мар-çке.

С а н т ă р. Мĕнле апла, «сирĕн çынсем мар»? Камсем вара эсир?

М и к и т. Эпир командировкăра. Паян — кунта, ыран — лере.

С а н т ă р. Хăçан пĕтет-ха вал сирĕн «командировка» вăхăчĕ?

Т и м о ш. Пĕтнĕ тесе шутлăр. Каятпăр. Акă паспорт. Паллă туса парăр та, ал-ле-ле, сыв пул, Упамсар. Ха-ха-ха!..

С а н т ă р. Та-а-ак, апла, каяс тетĕр-ха? Аçталла çул тытатăр-ха, вăрттăнлăх мар пулсан?

Т и м о ш. Ну, ку вал пирĕн ĕç, Александр Михалч.

С а н т ă р. Ну, мĕнех, калас килмест пулсан ан калăр. Атьăр-ха юлашкинчен, тухса кайиччен, чуна уçса каласар. Ак эсĕ, Тимош... Мĕнле сын эс? Мĕнле шухăш-кăмăлпа пурăнатăн? Мĕншĕн ниçта та ĕçе кĕместĕн?

Т и м о ш. Тĕрĕссипе? Куçа-куçăн?

С а н т ă р. Тĕрĕссипе, паллах. Мĕншĕн пытармалла пирĕн пĕр-пĕринчен. Мĕн шухăшлатăн, çавна кала. Ан хăра, милицине кайса каламастăп.

Т и м о ш *(калаçăва çав тери лăпкăн, хăй çине шанса, сассине хăпартмасăр, çемçен, йăвашшăн иттерме тăрăшать).* Ку вăл лайăх... Милицине каламанни. Анчах та эпĕ хăрамастăп. Хăрама сăлтавĕ çук. Документсене килсен тепĕр куннех тĕрĕслерĕр. Тарса килмен. Вăхăт çитсен, ирĕке кăларчĕç. Приговор тăрăх, манăн икĕ çулсăр хам пурăнакан хулана кайма юрамасть. Хăвăр пĕлетер. Çавăнпа та кунта килтĕм. Çуралнă яла.

С а н т ă р. Пурăнăр ялта. Никам та сире хăваламасть. Анчах та çынсем пек пурăнăр. Ĕçлĕр.

Т и м о ш. Эп ĕçлеме çуралман.

С а н т ă р. Çын ĕçленине çиме?

Т и м о ш. Вăт, кун пек тĕрĕсрех... Ĕмĕр иккĕ килмест. Манăн ăна лайăх пурăнсаирттерес килет.

С а н т ă р. Мĕнле-ха вăл, сирĕн шутпа, «лайăх пурăнса ирттерес» тени?

Т и м о ш. Амăрткайăк пек, ирĕкре!.. Кураймастăп эпэ таса, лайăх пурăнакансене. Çынсен телейĕ мана канăç памасть. Мĕншĕн-ха, ак, эсир телейлĕ пурăнатăр? Сире хисеплеççĕ, шанаççĕ. Пире ăçта ан пыр, унта хуса яраççĕ?

С а н т ă р. Та-ак... Анланатăп пек. Тата мĕн калăн?

Т и м о ш. Урăх нимĕн те. Хăвăр каларăр вĕт, чуна уçса калаçар терĕр. Вăт эпĕ сире халь уçса патăм.

С а н т ă р. йăлтах ăнлантăм... Çынсен кил-çурчĕсем, выльăх-чĕрлĕхĕ çунса кайнине курас килет сапăн. Ачапăчасем макăрнине айккинчен пăхса тăрас килет. Çапла-и?

Т и м о ш. Ăçтан пĕлетĕн?

С а н т ă р. Пĕлетĕп, Тимофей, витĕрех куратăп... Эсĕ мĕн? Эс мĕн, этем-и е тискер кайăк. *(Тимоша кăкăртан ярса илет.)* Ак, Çвет Ваньки вилсе кайрĕ. Ывăлĕ тăлăха тăрса юлчĕ. Савăн, путсĕр, ахăр!

Т и м о ш. Но, но!..

М и к и т. Сантăр, аллусене ирĕке ан яр!..

Т и м о ш. Ан тĕкĕнĕр мана. Эп сире тĕкĕнместĕп. *(Сантăр аллисене хуллен вĕçертет.)* Ну, вăт кун пек калаçма та шанчăклă.

С а н т ă р. Тăхта-ха... Эс мĕн?.. Эс мĕнле çĕр çинче утса çӳретĕн, эпир сывлакан сывлăшпа сывлатăн?.. Хăрушă çын эсĕ, Тимош...

Т и м о ш. Мĕн тăвас тетĕн, çавăн пек эпĕ, çын пурнăçне ăмсанакан çын.

С а н т ă р *(ăпăланаймасăр).* Аçтан-ха вăл сирте çавăн чухлĕ курайманлăх?

Т и м о ш. Эсир астăватăр-и вăрçă хыççăнхи çулсене? Астумастăр. Пĕчĕк пулнă эсир ун чух. Эпĕ астăватăп. Сава тухсан, анне пире икĕ уйăх хушши курăк шывĕпе усрарĕ. Хăй шыçăнса вилчĕ. Эпир, пĕчĕкскерсем, йăвари кайăк чĕпписем пек, тĕрлĕ çĕре салантăмăр. Пĕр пысăк хулана çитрĕм. Унта... унта «ырă çынсем» тупăнчĕç. Пирус туртма, эрех ĕçме вĕрентрĕç. Пуçланса кайрĕ вара «хаваслă» пурнăç!.. Эсир мĕнле шутланă? *(Хăйне урăх лăпкă тытаймасть, кăшкăрса ярать.)* Аçта манăн телей?! Кам аллине кĕрсе ӳкнĕ вăл? Калăр, председатель! *(Сасартăк аине алла илет те каллех лăпкăн калаçма пуçлать.)* Эсир мен, ман пурнăçра телейлĕ кунсем пулман тетĕр-им? Пулча. Манăн та çамрăклăх пулнă. Пирвайхи юрату та пулна. Хуçрĕç ман çамрăклăха. Пĕтерчĕç... Çавăнпа та хаяр

эпӗ. Хӑрушӑ ҫын...Ан хӑрӑр, тухса каятӑп кунтан. Унсӑр тем туса хурӑп. Хама хам та шанмастӑп. Манпа пӗрле Микит та пырать. Унсӑр эпӗ ниҫтӑ та каймастӑп. Вӑл хӑй те манран юлмасть. Юлма пултараймасть. Ҫапла-и, Микит?

Микит чӗнмест.

С а н т ӑ р. Аҫта?.. Епле каятӑр? Ниҫта та каймастӑр. Кӑларса ямастӑп эпӗ сире. *(Паспорчӗсене сейфа чиксе хурать.)* Кунта нимӗн те тумасан, тепӗр ҫӗрте инкек туса хуратӑр.

К ӑ р ӑ ҫ *(малтанах кӗрсе тӑнӑ та вӗсен юлашки калаҫӑвне итлесе тӑнӑ. Шӳт тунӑ пек, кулкаласа, вӑрҫмасӑр).* Ак мӗнле шухӑш пырса кӗрет ман вӑталнӑ пуҫӑма: пӑхатӑп та сирӗн ҫине—«нӑгляднӑй агитаци» эсир. Наглядная агитаци вырӑнне усрас пулать сире ялта. Халӑх сире курса апла тума юраманнине ӑнланса илтӗр. Сирен пата шкул ачисене стройпа илсе килсе кӑтартмалла. Хӑраса ӳкчӗр те сиртен лайӑхрах вӗренме тытӑнччӑр, сирӗн пек сын пулас марччӗ тесе. Ну, юрӗ... Кӑна эпӗ шӳт туса, сӑмах майӑн ҫеҫ. Акӑ мӗн, ачасем, ман пӗр шухӑш пур... Ҫитет вӑрҫса, тавлашса, ҫапӑҫса. Йӗркеллӗн калаҫса татӑлар. Ялта механизаторсем ҫитмеҫҫӗ. Ми-кит, сан аллусем ылтӑн, миҫе ҫул тракторпа ӗҫленӗ... Сана валли те, Тимош, ӗҫ тупӑнать. Ак, Ванька вырӑнне электромонтер пулса ӗҫлӗн... Эп ӗнтӗ колхоз председателӗпе калаҫрӑм.

Т и м о ш. Малтан пирӗнпе калаҫмалла, Михаил Герасимыч.

К ӑ р ӑ ҫ. Вӑт, ҫавӑнпа калаҫатӑп та сирӗнпе. Ӗҫлесе пӑхӑр ялта, тен, чӑнах та хӑнӑхса каятӑр.

Т и м о ш. Кашни ҫыннӑн пурнӑҫра хӑйӗн плане пур. Плансӑр пурӑнмастпӑр. Ялти пурнӑҫ пирӗн плана кӗмест.

К ӑ р ӑ ҫ. Тен, улӑштаратӑр хӑвӑр плана?

Т и м о ш. Ҫук, халь тин ӗнтӗ ҫук.

С а н т ӑ р. Ан та ӳкӗтле, атте, ӗҫлес ҫынсем мар вӗсем.

Т и м о ш. Ку тӗрӗс, ӗҫлес ҫынсем мар. Парӑр паспорта. Памасан... Памасан, эпир урӑхларах та калаҫма пӗлетпӗр, Александр Михалч!

К ӑ р ӑ ҫ. Ан хӑрат пире, Тимахви! Пире ӗнтӗ пӗрре кӑна мар хӑратнӑ. Халь тинех нимпе те хӑратаймастӑр: тамӑкпа та, шуйттанпа та.

Т и м о ш. Ну, мӗнех, документсем патне ыран кӗрӗпӗр. Шутласа пӑхӑр... ыранччен. *(Микита.)* Ну, кайрӑмӑр!- *(Тухса каять.)*

Микит ун сӑмахӗсене илтмен пекех ларса юлать.

С а н т ă р *(Микита).* Кампа çыхланса кайнă эсĕ? Шутласа пăх-ха çакна, пичче.

Микит ыйхăран вăраннă пек тăрать те сăмах чĕнмесĕрех тухса каять.

К ă р ă ç. Шуйттан пурнăçĕ... Çырма юхать, хĕвел тухать, çутатать... Вăрăмтуна вĕçет... Пурнăç! Хăть вилсен мĕн пуласса пĕлес марччĕ. Пурте пит лайăх пĕлетпĕр, тăпра... Ёмĕре ирттеретпĕр, кăнтăрла çылăха кĕрсе, каçхине çывăрса. Сисместĕн те, вилĕм йăпшăнса пырать сан пата. Унăн ура сассисем илтĕнмеççĕ. Унран укçа парса та, пытанса та, пăрăнса та юлаймастăн, пурне те пĕр шăпăрпа шăлать. Тем çитмест, ятлаçатпăр, хирĕçетпĕр, пĕрне-пĕри кӳрентеретпĕр... Лайăх пурăнасшăн-çке пурнăçа пурăннă чухне. Тăрăшатăн ĕмĕр тăршшипех, сана курайма ççĕ.

С а н т ă р. Мĕн эсĕ, атте? Мĕн пулчĕ сана? Нихăçан та эс кун пек калаçнине илтмен.

К ă р ă ç. Ман çула çитсен шухăшлама тивет ун çинчен те.

С а н т ă р. Иртерех-ха ун çинчен шутлама. Кусем пирки пулсан... Нумаййăн-и вĕсем? Ытларах лайăх çынсем çĕр çинче.

К ă р ă ç. Вăл çаплах, ывăлăм... Çавах та кӳренмелле. *(Кăрăç тухса каять})*

Сантăр шухăша путса юлать. Кăшт тăхтасан, телефонпа шăнкăравлать.

С а н т ă р. Кам? Петр Романыч? Салам! Груздев калаçать... мар, Сантăр... Каллех çавăн пирки. Пĕлетĕп, илсе килнĕ. Анчах материалсем илсе килнипех клуб хăй тĕллĕн пулса лармасть-çке. Ĕç алли çитмест. Анланăр мана, Петр Романыч, ку та çийĕнче тумалли япала... Утă çулса пĕтертĕмĕр, вырма тухиччен вăхăт пур. Мăн çул çине тухма çул тăвас пирки мĕнле?.. Эпĕ те çаплах шутлатăп. Пĕтĕм машинăсене паянах чул турттарма ярасчĕ. Тавлашнипе ĕç тухмасть, пирĕн ĕç тăвас пулать... *(Трубкăна хурать.)*

В а л я кĕрет, вăл çав тери хумханни палăрать.

Ак, Валя, шăпах эсĕ кирлĕччĕ мана. Ача çуртĕнчен килнисем пычĕç-и сирĕн пата?

В а л я. Пычĕç.

С а н т ă р. Çитрĕç те-и?

В а л я. Парса ямастăп эп ăна!..

С а н т ă р. Кама?

В а л я . Сашăна... Памастăп эп ăна никама та... Хамăр патрах хăваратăп, яланлăхах!..

С а н т ă р. Тăхта-ха эс, Валя, кун пек япалана шутламасăр тумаççĕ. Лайăх шутларăн-и эсĕ кун пирки?

В а л я. Лайăх шутламан пулсан килмен те пулăттăм. Çĕр çывăраймастăп эпĕ ун çинчен шухăшласа.

С а н т ă р. Ара, мĕнле-ха капла, ял Совет ларăвĕнче те йышăнтăмăр-çке. Документсем те хатĕр.

В а л я . Ял Советĕнче... Мĕншĕн-ха манпа калаçса пăхман? Хăçантанпа пурăнать Саша пирĕн патăрта.

С а н т ă р . Аннӳ те хирĕç, ав. Эп унпа калаçрăм. «Хĕр пуççăн мĕн ачи усрама илсе лартăр, çынсем мĕн калĕç»,— тет. Эпир ăна çапла тăвăпăр: вырнаçтарăпăр ача çуртне, ытах эс ун патне хăнăхнă пулсан, юрататăн пулсан, час-часах кайса килĕн.

В а л я . Çук! Ниçта та, никама та памастăп эпĕ ăна!.. Кăна эпĕ татăклă шутланă.

С а н т ă р. Аннӳ хирĕç пулсан мĕнле-ха?

В а л я . Çын патне пурăнма куçатăп, ĕмĕрне те качча каймастăп, пĕтĕм пурнăçăма ăна паратăп. Пăхса ӳстеретĕп эпĕ ăна, Александр Михалч, ан пăшăрханăр!

С а н т ă р. Чим-ха, ун пекех ан вĕрилен-ха эсĕ.

В а л я . Тăлăх-турат пек пĕччен вăл. Шел те мар-и? Хăй те' мĕнле хăнăхрĕ мана, эсир уйăрасшăн.

С а н т ă р. Ача çуртĕнче пăхмĕç тетĕн-им? Патшалăх пăхса çитĕнтерет.

В а л я . Унта ачасем нумай. Саша манăн пулать, манăн. Парса ямастăп эп ăна.

С а н т ă р. Çтаппан мĕнле?

В а л я . Мĕн, Çтаппан?

С а н т ă р. Вăл та хирĕç-çке. Тата акă мĕн калам. Çулсем иртнĕçемĕн... тен, кайран ма ун пек турăм-ши тесе ӳкĕнме пуçлăн. Вара мĕн пулĕ? Вăл сана хăнăхса çитĕ... Ун чухне ăна уйăрма йывăртарах пулĕ.

В а л я . Эсир мана ăнланмарăр, Александр Михалч... Тепĕр хут калатăп. Эп Сашăна ниçта та, никама та памастăп. Анне килтен хуса ярсан та, Степа мана пăрахсан та... Эп ăна пăхса çитĕнтеретĕп. Вал ман ывăл пулать. Çаплах чĕнтеретĕп те эп ăна... анне тесе. Урăх ним те ан ыйтăр. Çак манăн татăклă сăмах.

С а н т ă р . Нумай пулмасть çарауран чупса çӳреттĕн, Валя. Çитĕннĕ иккен эсĕ... Эп асăрхаман та. Яланах сана ача-пăча тесе шутланă.

М а р и ç кĕрет, ачасем вылямалли лаша çĕкленĕ,

Мариç. Саша лаша ыйтать. Ак, илсе парас терем... Тĕлĕкре те çавăнпа аташать.

Сантăр лашине тытса пăхать.

Саитăр. Инкек... вăл куçа курăнса килмест çав. Шел ачана, пĕчĕклех ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлчĕ.

Мариç. Тем тумалла ĕнтĕ? Халь илме килчĕç те, парса та ярас килмест. Хăнăхрăмăр эпир ăна.

Валя. Анне!.. Эх, лайăх та-çке эсĕ...

Мариç. Пурăнтăр ĕнтĕ... Кичем пире иксĕмĕре... Пурăнтăрах савăнса... Ашшĕ-амăшĕ çуккине ан чухлатăр... Валя хăпа пĕлмест, ир те, каç та унпа.

Сантăр. Эппин, юрĕ, парса ан яр. Пĕлетĕр-и, эпир сире çĕнĕ çурт лартса парăпăр. Чаплă, çутă çурт! Ку вăл тĕлĕнмелле япала, шуйттан илесшĕ! Чупать-и? Сывлăхĕ мĕнле?

Валя. Чупать... Усет, кашни кунах ÿсет, Александр Михалч.

Сантăр. Ача валли мĕн кирлĕ, яланах кунта килĕр. Пулăшăпăр. *(Пĕччен.)* Этем çĕр çине ырă тума çуралать. Çын тунине пĕтерме мар, хăй тума. Паллах'', пур пурнăçра усал шухăшлă çынсем те, ултав та, курайманлăх та... Сапах та ырă кăмăллă çынсем ытларах! Шанатăп эп çакна, шанатăп!..

Мариç. Тавтапуç, Сантăр шăллăм, ырă сăмахушăн. Эп каям-ха, эппин, ачана пĕччененех хăварнăччĕ. *(Мариç тухса каять. Валя юлать.)*

Сантăр *(Вальăна).* Çтаппан пирки ан пăшăрхан. Кăна эпĕ хам майлаштарăп. Сана юрагсан, Сашăна та юрататъ вăл..

Валя *(пауза хыççăн).* Виçĕ кун курман эпĕ ăна, тĕл пулсан та калаçмасть.

Сантăр. Чăнах-и?.. Эсĕ те унпа тĕл пулсан ан калаç. Юрать-и? Ыттине хам майлаштарăп. Калаçса татăлтăмăр? *(Алă парать.)*

Валя *(алă парса).* Калаçса татăлтăмăр, Александр Михалч. *(Тухса каять).*

Чаршав

## Пиллĕкмĕш картина

Кăрăç килĕнчс. Каçкÿлĕм. Сĕтел çинче ĕçсе яма пуçланă эрех **кĕ**леичи. Икĕ стакан. Микит чÿрече умĕнче тăрать. Тем шухăша путнă.

Тимош сётел хушшинче ларать, кёленчери юлашки эрехе стакансем сине ярать.

Тимош. Тыт!.. Мён шухăша кайрăн? Килте ним вырăнне хумаççĕ сана... çĕрти çӳпĕ вырăнне. Эс татах чаваланса пурăнасшăн кунта. Нумайччен-и?

Микит. Каймастăп эпё, Тимош, ниçта та.

Тимош. Ак тата!.. Калаçса татăлтăмăр-çке. Мён тума чёнтён-ха эс мана кунта? Чул кăларма-и? Эпё лере те чул кăларман.

Микит. Пур çĕрте те çавах.

Тимош. Çук, Микит, пур çĕрте те çавах мар. Пурнăç вăл ăçта пăхнă унта вĕресе тăрать. Ана тĕрĕс пурăнса иртермелле. Мёнле каланăччĕ-ха пёр писатель: «Пурнăçа ăна çавăн пек пурăнса иртерес пулать, кайран япăх пурăнтăм тесе ӳкёнмелле ан пултăр». Эпир çĕр çинче пурте «хăнара» кăна, çавна ан ман.

Микит. Аçта каяр-ха? Ёçлемесен, пур çĕртен те хăвалĕç.

Тимош. Пирён аслă Совет çĕршывĕнче кирек ăçта та çул уçă. Вĕçтерĕпĕр эпир санпа кăнтăра — Хура тинёс хĕррине!.. Кунта пирён хĕл каçипех юр та çил-тăман, хăлхана там илет. Унта ăшă, чечексем çурăлаççĕ. Тинёсре шыва кĕрĕпĕр. Ак ăçта вăл чăн-чăн пурнăç!

Микит. Мён тăвăпăр-ха эпир унта? Çаплах, ним ёçлемесĕр пурăнма пулать-и?

Тимош. Эс ан пăшăрхан. Тупатпăр, Микит, ёçне те тупатпăр, тем те тупатпăр. Унта çитме кăна укçа кирлё. Ятарласа шанса килтём-çке сан пата... Сана кунта пурнăç памаççĕ пёрех. Аçупа шăллу çисе яраççĕ, шăммусене йытта пăрахса параççĕ. Ну, мён чёнместён?

Микит. Каймастăп эп ниçта та.

Тимош. Апла, каймастăп тетён-ха? Çук, тăванăм, манпа каймасăр тăма пултараймастăн эсё. Емĕрлĕхех парăмра эс ман умра. Манса кайрăн-им?

Микит. Ун чух эпё айăплă пулманнине хăвах пĕлетĕн-çке.

Тимош. Çапла-а... Халь «эп айăплă мар»... Эс ирёкре, эпё вара саншăн икё çул ларса тухрăм, хам пурнăçа шеллемерём. Ытла та час мантăн иккен эсё ырă тунине.

Микит. Пурăнса пăхар-ха кунтах, майлашса кайё. Ёçлеме тытăнса пăхар.

Тимош. Сысна, ёне, сурăхсем, чăх-чĕп ёрчетĕпĕр... Çапла-и?

Микит. Пурте çапла пурăнаççĕ-çке.

Т и м о ш . Ман пурте пурăннă пек пурăнас килмест. Эп урăхла çын. Тăвăр кунта. Мана ирĕк кирлĕ, Микит, ирĕк. Чи кирли — пурнăçа асап курмасăр, шухăшламасăр, илемлĕ пурăнса ирттересси. Ытти пурте чепуха! Йăлтах çынсем шутласа кăларнă.

Ç т а п п а н кĕрет.

М и к и т. Аçта пултăн?

Ç т а п п а и. Çул тунă çĕрте. Пĕтĕм халăх унта.

М и к и т . Çуралнă кун ман паян, шăллăм. Пĕлетĕн-и, миçене кайрăм?

Ç т а п п а н. Çук, пĕлместĕп.

Т и м о ш. Япăх ку, пиччӳ хăçан çуралнине пĕлместĕн.

М и к и т *(Çтаппана эрех сĕнет).* Тыт, ĕçсе пар ман сывлăхшăн.

Ç т а п п а н. Çуралнă кун ячĕпе саламлатăп. Эрех ĕçместĕп, пичче. Пĕркунхишĕн те çын куç умне курăнма намăс.

М и к и т *(тĕлĕнсе).* Намăс?.. Вăт ку аван вара! Намăса пĕлетĕн пулсан, лайăх. Ну, мĕнех, ĕçместĕн-тĕк ан ĕç. Тĕрĕс тăватăн. Ан верен ăна ĕçме, путсĕре, ырă тумасть вăл. *(Хăй ĕçсе ярать.)*

Т и м о ш *(кĕленчере эрех юлманнине кăтартать).* Степа, кайса кил-ха Митрофан патне. Пуçланчĕ пулсан ĕçер... Вăхăт пулсан, хăй те килтĕр. *(Сехет çине пăхса.)* Шăпах магазина хупма вăхăт. *(Укçа парать.)* Тыт.

Ç т а п п а н . Кирлĕ пулсан, хăвăр кайса илĕр.

Т и м о ш . Аслă... Ну, мĕнех, хамăнах кайса килме лекет. *(Тухса каять.)*

Ç т а п п а н . Аçтан çыхланса кайнă эс унпа?

М и к и т . Сан ĕç мар! Пурте ан вĕрентĕр. Аш çунать, шăллăм, йывăр мана.

Ç т а п п а н . Мĕн, чирлерĕн-им?

М и к и т . Ну, Вальăпа мĕнле санăн ĕç-пуçсем?

Ç т а п п а н . Нимле те мар... Курман эп ăна çав каçранпа. Качча тухать, теççĕ...

М и к и т . Валя-и? Кама?..

Ç т а п п а н. Пĕлместĕп.

М и к и т . Вăт кăна вара илтмен. Кам каларĕ?

Ç т а п п а и. Сантăр.

М и к и т . Ну, Сантăр каларĕ пулсан, тĕрĕсех те пуле. Вал пĕлме кирлех... Мĕнле-ха вал ун пек хăвăрт? Эсир перле çӳреттĕрччĕ-çке. А-а, тепĕр тесен, пĕр Валя качча кайнипех тĕнче пĕтмест.

Ç т а п п а н. Маншăн тĕнче пĕтнепе пĕрех.

М и к и т. Эс Çартан таврăннă çĕре тепĕр Валя ÿссе çитĕнет.

Ç т а п п а н. Кирлĕ мар мана урăх никам та.

М и к и т. Мда-а, ĕçсем.

Ç т а п п а и. Микит, кала-ха, мĕншĕн улталаса ятăн эс мана çав касхине?

М и к и т. Чăнах та, шÿт туса кăна. Эп сана япăх тăвасшăн пулман. Кам шутланă вал ун пек хăтланĕ тесе.

Ç т а п п а н. Çав каçранпа пĕтĕм тĕнчене хура чаршав карса илнĕ тейĕн.

М и к и т. Каçар эс мана, шăллăм, кÿреннĕ пулсан, пĕртăвансем-çкĕ эпир.

Ç т а п п а н. Ĕç унта мар... Эп сана тÿпелеме те, каçарма та пултаратăп. Мĕнле-ха çавăн пек ирсĕр çынсем пулаççĕ çĕр çинче?

М и к и т • *(хуткупăс çине кăтартса).* Кала-ха мĕн те пулин.

Ç т а п п а н. Мĕн?

М и к и т. Ну, мĕн те пулин, чуна пырса тивекеннине. Аша çунтартăр!.. Куççулĕ юхса антăр!

Ç т а п п а н. Пĕлместĕп ун пеккине.

М и к и т. Мĕн пĕлетĕр эсир, хальхи çамрăксем? Эпир пĕлнĕ ĕлĕк. Пар-ха!.. *(Хуткупăс илет. Юрлать.)*

Анне мана, ай, çуратсан,
Шур тутăрпа та чĕркемен.
Ырă куртăр-ха ку темен,
Телейлĕ пултăр ку темен.
*(Халах юрри)*

Ак мĕнле юрланă эпир. Илемлĕ?.. Тоттă! Илемлĕхе ăна чунпа ăнланас пулать. Ана сăмахпа каласа ăнлантараймастăн. Э-эх, куратăп та — ялти пĕтĕм илемлĕхе пĕтерсе хунă. Çил арманĕсем çук. Тавăш кÿлли типсе ларнă. Мĕнле илемлĕччĕ Тавăш кÿлли хĕрринче! Йĕри-тавра йывăçсем, каçсерен çамрăксем пухăнса вăйăсем вылятчĕç. Пĕтернĕ йăлтах!..

Ç т а п п а н . Ак, эсĕ ыран-паян тухса каятăп тесе пурăнатăн. Эпĕ тухса каям ялтан, тепри кайтăр. Вара камха илем кÿрекенĕ? Тарзана пĕтертĕр...

М и к и т. Кур-ха эсĕ ăна, юрла пуçларĕ. Эсĕ те вĕсем пекех юрлама пĕлетĕн иккен.

Ç т а п п а н. Анланаймастăп эпĕ сана, пичче.

М и к и т. Аçтан ăнланăн-ха эсĕ мана... Эсĕ мĕн, манан ялтан тухса каяс килнĕ тетним? Каяс килмен, халĕ те каяс

килмест. Ак, чĕрене уçса кăтартма хатĕр, каяс килмест.

Ç т а п п а и. Каяс килмен пулсан, мĕншĕн тухса кай-нă-ха?

М и к и т. Çамрăк-ха эсĕ, пурне ăнланаймастăн. Уссе çитĕн, пурнăç тути-масине туйăн, вара пĕлĕн.

М и т р а х в а н п а Т и м о ш кĕреççĕ.

Т и м о ш. Ак, эпир çитрĕмĕр те. Кичемпе вилсе кай-мастăр-и эсир кунта пирĕнсĕр? Ну, Митрофан, ирт тĕ-пелелле. Килти пек пул.

М и т р а х в а н. Кăна ĕнтĕ, мĕнле калас... «килти пек пул та хăнарине манса ан кай», — теççĕ.

М и к и т. Лар пирĕнпе, Çтаппан.

Ç т а и п а н. Ман каймалли пур. *(Тухса каять.)*

М и т р а х в а н. Çуралнă кун тетĕр, иккĕнех-им? Кил-тисем ăçта?

Т и м о ш. Эпир яланах иккĕн, Митрофан. Ĕмĕр тăрш-шĕпех иккĕн. Кам кирлĕ пире?

М и т р а х в а н. Кăна ĕнтĕ, мĕнле калас... Пуç йĕри-тавра лайăх шутласа пăхсассăн...

Т и м о ш. Хăть пуç йĕри-тавра шутла, хăть... Çавăн пек çуралнă эпир. Çын телейне айккинчен пăхса çӳреме. Юратмастăп эпĕ çав телей тенине. Тарать вал манран. Тытма пĕлместĕп эпĕ ăна. Алăсем яка манăн. Шуса тух-са тарать.

М и т р о ф а н. Кăна ĕнтĕ, мĕнле калас...

Т и м о ш. Мĕнле калас тетĕн, çавăн пек кала. *(Мит-рахван аллисене тытса.)* Санăн вара аллусем катрашкал-лă. Тытса пăхма çемçе пулин те, катрашкаллă вĕсем. Те-лей пырса лексен вĕçертмеççĕ. Çапла-и?

М и т р а х в а н. Кăна ĕнтĕ, Тимофей...

Т и м о ш. Мĕнле калас-и?

М и т р а х в а н. Мĕнле калас...

Т и м о ш. Телейлĕ эсĕ, Митрофан, «кипкепе» çуралнă. *(Микита.)* Эс мĕн, тăванăм, сăмсуна усрăн? Э-э-э, килĕш-мест кун пек, килĕшмест. Хисеплеместĕн эсĕ хăвăн çурал-нă кунна. Лар. Тултарса пар пире пĕрер. *(Микит тулта-рать.)* Эрех ĕçме юратмастăн курăнать эсĕ.

М и т р а х в а н. Эрех ман ĕсре, Тимофей, мĕнле ка-лас, вал шĕвеке сыпсан... Мана хамăр ялти кооперацине шанса панă...

^Т и м о ш. Коопераци шанса панă-ха сана... Хăвна те-лейлĕ тесе шутлатăн-и эсĕ? Çак тарана çитсе пĕр хĕре те пулин юратса курнă-и эсĕ? Мĕн курнă эсĕ иурнăçра?

Митрахван. Кăна ёнтĕ мĕнле калас... Эп хама шанса панă ĕçĕ тĕплĕ, йĕркеллĕ тăватăп.

Микит *(стаканне тыттарать).* Тыт, Митрахван, ĕç.

Митрахван. Мĕнле калас...

Микит. Ним те ан кала, ĕç. Паян манăн çуралнă кун.

Митрахван. Ну, енчен те çуралнă кун ячĕпе пулсан... мĕнле калас, пиртен тухнă йăла мар. *(Еçсе парать.)*

Тимош. Ну вăт, ку урăхла калаçу. Халь кала пире вăрттăн: хĕрачасене чуптуса курнă-и эсĕ?

Митрахван. Ну-у, кăна ёнтĕ, Тимофей... Кун çинчен калаçма та аван мар та... Енчен те пуç йĕри-тавра! лайăх шухăшласа пăхсан... Мораль енчен илсе пăхсан...

Тимош. Тьфу! Пуçларĕ... Аçтан çавăн пек калаçма вĕреннĕ эсĕ? Пăтраштаратăн, пăтраштаратăн. Ниепле ăнланма çук сана. Асу пур санăн, калаçма пултаратăн. Анчах пуçна тĕрлĕрен ăпăр-тапăрпа тултарса лартнă.

Митрахван. Техникум пĕтернĕ, мĕнле калас, кооператци енĕпе.

Тимош. Чуну çук санăн, Митрофан. *(Кăкăрне çапса кăтартать.)* Пуш-пушах сан кунта! Паллах, ăна кооперацире сутăн илме çук çав. *(Тултарса парать.)* Тыт!..

Митрахван. Эпĕ вăл шĕвеке сыпсах каймастăп. Çĕр грамм ĕçнипех ÿсĕрĕлсе каятăп. Урăх, каçарăр, пултараймастăп. Ĕç пур манăн.

Тимош. Мĕн ĕçĕ пултăр? Магазина хупнă.

Митрахван. Укçа леçсе параймарăм. Паян пухнă укçана.

Тимош. Кама кирлĕ сан укçу? Ыран леçсе паратăн. Кунта хула мар, çаратса каяс çук. Тыт!

Митрахван. Кăна ёнтĕ, мĕнле калас... ĕçсех пара ши?

Микит. Ĕç, ĕç. Ик стаканпах йăванмастăн. Йăва сан та, кунта таçта мар.

Митрахван *(ĕçсе парать).* Хам та калатăп.Кунта... хула мар. Укçине ăна ыран та лессе пама пуле. *(Усĕрĕлни сисĕнет.)* Ак, Тимофей, эсĕ мана телейлĕ тетĕн. Эпĕ хама телейсĕр тесе шутлатăп.

Микит. Мĕн çитмест-ха сана?

Митрахван. Кăна ёнтĕ, мĕнле калас... Ачаранпах эпĕ артист пулма ĕмĕтленнĕ.

Тимош. Артист!.. Эсĕ артист, Митроша? Ха-ха-ха!..

Митрахван. Эс, эс ан кул, Тимофей. Пĕрре те кулăшла мар... Талант пур манăн. Сас лайăх. *(Хут кăтартать.)* Акă, Шупашкартан чĕнсе янă. Александр Михалч ямасть. Кооперацинчех ĕçле тет,

Т и м о ш *(юра хĕтертсе).* Анланмасть вал сана! Курха эс, мĕнешкел талант пĕтет. Кооперацинче Çитăр мучи те ĕçлеме пултарать.

М и т р а х в а н . Мана, мĕнле калас, районти начальник хăй мухтарĕ. Артист пек юрлан терĕ. Гр-рамота та пур манăн.

Т и м о ш . Анланмаççĕ сана, Митроша. Эп сан вырăнта пулсан, ыранах тухса каймалла. Мĕнешкел малашлăх сан умăнта! Ну, халь киле кайса çывăр, ачам. Паппа ту. Унсăр çитейместĕн. Ĕçетни тепĕр стакан?

М и т р а х в а н *(хирĕçех те мар).* Кăна ĕнтĕ... мĕнле калас...

М и к и т . Ан пар урăх, киле çитеймĕ тата.

М и т р а х в а н . Мана Шупашкартан килнĕ артистсем мухтарĕç. Юрий Никулин сăнлă терĕç.

Т и м о ш . Суяççĕ вĕсем, Аркадий Райкин сăнлă эсĕ. Мар-ха, Тарапунька...

М и к и т . Ну, чипер кай, Митрахван.

М и т р а х в а н . Ĕнтĕ эпĕ, мĕн... мĕнле калас... паппа тума. *(Тухса каять.)*

Т и м о ш . Анлантăн-и?

М и к и т . Мĕн?

Т и м о ш . Укçа!

М и к и т . Вара?

Т и м о ш . Айван!.. Кĕретпĕр те илетпĕр. Кам шутлать эпир тесе. Шутласан та, мĕнпе кăтартса парăн. Доказательство?! Те хăй ÿсĕрпе таçта çухатса хăварнă.

М и к и т . Эс хуть те мĕн ĕçле, мана ан хутшăнтар ку ĕçе. Ман кайса ларас килмест.

Т и м о ш . Никам та пĕлес çук. Алла кĕрсе ÿкнĕ укçана вĕçертетпĕр-и? Хатĕрлен.

К ă р ă ç кĕрет. Аллинче хаçат.

Мĕн çыраççĕ хаçатра, Михал Герасимыч?

К ă р ă ç. Ухмахсем çинчен. Ухмахсен хакĕ ÿснĕ, тет.

Т и м о ш *(кăмăлсăррăн).* М-да-а... Урăх чĕнместĕп.

К ă р ă ç. Каллех сĕтел çинче эрех? Пуçăрта эрех шухăшĕ кăна пулĕ!

М и к и т . Атте, сан хăть саламласчĕ. Паян ман çуралнă кун.

К ă р ă ç. Эсĕ хăçан та пулин аса илнĕ-ши манăн çуралнă куна? Аннÿн çуралнă кунне? Çук! Пĕлместĕр те эсир эпир хăçан çуралнине те. Ну, мĕнех, тултар, ĕçсе парам сан сывлăхушăн.

Микит пер стакан тултарса парать.

Хăнăхман эп сирен пек пăтавккаран ĕçме. Ман хамăн пур *(Шкафран пĕчĕкçĕ, пӳрнеске пек черкке илсе, эрехне стаканран унта ярать.)* Этемле пурăн... Çынсем пек. Вара нихăçан та пĕтместĕн. *(Ĕçсе ярать те черккене каллех вырăнне кайса лартать.)* Тутлă-и вăл çак япала, пылак-и? Ĕлĕк ăна эпир çур литр эрехпе ĕçкĕ туна. Эсир ак миçе кĕленче пушатнă.

Т и м о ш. Ĕлĕк самани урăхла пулнă, Михал Герасимччă. Халь çĕнĕлле пурăнатпăр. Космос ĕмĕрĕнче.

К ă р ă ç. Ĕненместĕп эп этем сывлăхне хирĕç пыракан самана пур тенине. Манăн ватă пусăма вырнаçмасть вăл япала!.. Пурнăç çитмест-и е ытлашши иртĕхсе кайрăмăр.

У к ç и н е кĕрет.

У к ç и н е. Каллех ĕрлешетĕр. Чăнах, пĕр кун иртмест пуле эсир хирĕçменни. Мĕн кирлĕ сире?

К ă р ă ç. Тӳсме пултараймастăп харам пырсене. Хуларан яла тарса килеççĕ. Ялтан ăçта хуса ярас пулать вĕсене?

У к ç и н е. Тата мĕн калăн. Тăван ывăлăма килтен хуса яма манăн вĕсем вуннă мар. Захар Петипе Кăлăкла Ваççин çитес шăматкун салтака каймалла, тет. Пирĕн Çтаппана та хут килсе параççĕ ак.

К ă р ă ç. Вара... Мĕн нăйкăшан? Каять те килет. Бирса вăхăчĕ мар. Кăштах тăн кĕртсе яраççĕ. Атту ытла ăссăр, пусĕнче çил вĕрет.

У к ç и н е. Çапла ĕнтĕ... Сирĕнпе йĕркеллĕ калаçасси пур-и? Ĕрех-сăра туса хуман. Çынсем ăсатма килсен, мĕнпе хăналас? Лавккаран илме хаклă. Ун чухлĕ эрех ăçтан илĕн укçа парса.

К ă р ă ç. Икĕ хуран сăра вĕрет, хăнала.

У к ç и н е. Хальхи çамрăксене ăçтан сăрапа ӳсĕртен?

К ă р ă ç. Мĕншĕн-ха вĕсене ӳсĕртмелле? Усĕртесшĕн кăна ĕçтермелле-и?

У к ç и н е. Сантăрпа калаçса пăх-ха тесшĕнччĕ. Мĕкĕте маткин савăт-сапа пур. Сантăртан хăрать.

К ă р ă ç. Эс мĕн, карчăк, тăнран тухрăн-им? Эпир те килте эрех юхтарма пуçласан, вара ыттисем кăнтăр кунĕнчех урамра юхтарма тытăнĕç.

У к ç и н е. Сирĕнпе сăмах вĕçне тухма пулать-и? Хамăнах кайса калаçма тивет. Пур çĕре те хамăн çитес пулать. *(Тухса каять.)*

К ă р ă ç *(малтанхи калаçу çине куçса).* Саламат кирлё сире, саламат!.. Аттен вуниккёлле явнă саламачё алăк патёнчи пăтаран çакăнса тăратчё. Иёрке пулнă. Эпир атте-аннерен иртмен. Вёсем калани пирёншёи саккун пулнă.

М и к и т. Мён, атте, эсё те пире саламатпа сунтарас теместён пуле те?

К ă р ă ç. Анну сёчёпе ăс кёменнине качака сёчёпе ăс кёртеймён.

С а н т ă р васкаса пырса кёрст. Ним чёнмесёрех, кăмака хыçне кёрсе пăшал илсе тухать. Хуçлатса, патронёсене пăхать. Кёпçисене çутă çине пăхса тёрёслет.

С а н т ă р. Пенё... Çавсемех...

К ă р ă ç. Мён пулнă?

С а н т ă р. Кур, акă... Икё кёпçинчен те пене. Тасатса та хуман.

К ă р ă ç. Аçта, мёне пенё?

С а н т ă р. Иртнё каç Шлаваш вăрманёнче пăшие персе пăрахнă.

К ă р ă ç. Эп ёнтё çирём çул хушши унран тискер кайăка та, кайăк-кёшёке те пемен. Хăшё печё?

М и к и т. Эп пемен.

С а н т ă р. Пемен?

М и к и т *(чун-чёререн).* Пурнăçра пёрре те пулин ёненме пултаратăр-и эсир мана? Тупа тăватăп... Атте, Сантар, чăнах та пемен, ёненёр.

К ă р ă ç. Апла кам пенё-ха? Тен, кăмака хыçёнче тăнă çёртех хăй тёллёнех персе янă?

Т и м о ш. Эп пене... Анчах та пăшине мар, кураксене.

С а н т ă р. Юрё, кураксене пене пултăр... Акă документсем! *(Сётел çине кăларса çапать.)* Тухса кайăр ялтан! Çирём тăвата сехет вăхăт сире!..

Т и м о ш. Вăт, ку урăхла калаçу, Александр Михалыч. Куншăн тав тăватпăр сире. Çапла-и, Микит?

Микит чёнмест.

С а н т ă р. Ман сăмаха асра тытăр, çынсем пек пурăнма пуçламастăр пулсан, ун пек тăвас килет-и сирён, çук-и, кашни утăм сире тёпсёр шăтăк патне илсе пырать. *(Тухса каять.)*

М и к и т. Ёненместёр!.. Ну, ан ёненёр, тепёр тесен!..

К ă р ă ç. Ял çине тухма, çын куç умне курăнма намăс!..

М и к и т *(тарăхса кăшкăрать.)* Эс ан тух ял сине! Ватăлнă ёнтё, пенсие тухнă. Лар кăмака çинче!..

К ă р ă ç. Çак анчăк çурине эпир çуратса янă çут тĕнчене.

М и к и т. Кая юлса çуралнă эсĕ, атте!

К ă р ă ç. Вара?

Микит. Маларах çуралнă пулсан, санран ла-айăх кулак пулмалла...

К ă р ă ç. Эп кулаксемпе кĕрешнĕ чухне эсĕ... çуралман та! Аçупа çавăн пек калаçма хăятăн, чĕчĕ ачи!.. Çак сăмахсене илтме çуратса янă-и эпир сана? *(Пуртă илет.)* Çук текех эсĕ маншăн çут тĕнчере, Микит! Эс ман ывăл мар, мана атте тесен ан чĕн! Касса пăрахатăп сана, путсĕре. Тымарĕ-мĕнĕпех кăкласа ывăтатăп! Пўрт умĕ çаралса юлтăр. Иртен-çўрен курса ахăртăр санран!.. Тухса кайăр... паянах! Халех!.. Уру йĕррисем ан юлччăр кунта... Тасалăр! *(Тухса каять.)*

М и к и т. Командировка вĕçленчĕ тинех. Эп аттене пĕлетĕп... Кун хыççăн ялта пурăнмалли çук.

Т и м о ш. Эп сана мĕн каларăм. Килтех пул. Эп халех таврăнатăп. Кайса çўрем пăхкаласа. *(Тимош каять.)*

Ç т а п п а н кĕрет.

М и к и т. Ну, шăллăм, сывă пул. Аттепе аннене ан кўрентер. Тепле пулсан та, аттепе анне вĕсем. Кам пиртен тĕрĕс тăвать, пĕлсе пĕтер.

Ç т а п п а н. Каяс тетрим?

М и к и т. Каятпăр.

Ç т а п п а н. Эпĕ те каятăп.

М и к и т. Аçта?

Ç т а п п а н. Çара. Ак повестка.

М и к и т *(вулать).* Тепĕр виçĕ'кунтан... Епле-ха эсĕ, шăллăмçăм, кун çинчен никама та каламастăн?

Ç т а п п а н. Каяс кунне тин калатăп. Унсăр хурăнташсем сăра-эрех хатĕрлеме тытăнаççĕ. Эпĕ эрех ĕçмесĕр тухса каясшăн.

М и к и т. Епле апла?

Ç т а п п а н. Çаплах. Кутамкка çакнă та — тухнă та кайнă. Анне йĕме пуçлать. Тўсме пултараймастăп аннен куççульне.

М и к и т. Çавăнпа вал анне те. Аннесем йĕмесĕр мĕнле тўсчĕр-ха? Вал сана çуратса, кăкăр сĕчĕ парса ўстернĕ. Çăмăл тетним ăна ачисене хăйĕнчен уйăрма?.. М-да-а... Ĕçсем. Кутамкка çакнă та — тухнă та кайнă тетĕн-и-ха? Тĕлĕнмелле!.. Эпир ун пек кайман, шăллăм. Эпир салтака кайнă чух ял чĕтресе тăнă. Пар лашапа, шăнкăравсем-

пе, тутăрсем сулса... Хĕрсем йĕрсе юлатчĕç. Хĕрхенсе мар, хитре, илемлĕ юрланăран йĕнĕ. Шел, сана ăсатма юлаймастăп. Асатăттăм ĕлĕкхи пек, пар лашапа... Хуткупăсне хам калана пулăттăм. Эх, аса илетĕп те слĕкхине, куççуль тухать. *(Хуткупăс илсе, салтак юрри юрлать.)*

Сыв пул ĕнтĕ, шĕшкĕлĕх,
Иртрĕ пуль майру пуласси.
Сыв пул ĕнтĕ, тăванăмсем,
Иртрĕç пуль пĕрле пуласси.
*(Халăх юрри)*

Ак мĕнле юрланă!..

Ç т а п п а н. Халь ун пек юрласа çӳресен кулаççĕ.

М и к и т. Кам кулать? Сантăр кулать-и? Тип-типе сын вăл Сантăр. Пăрсан та шыв тухмасть унран. Илемлĕхе ăнланмаççĕ вĕсем!.. Юрлар санпа юлашки хут, шăллăм. Шуйттан пĕлет-и, тата тахçан курăпăр пĕрне-пĕри. Пурнăç вăл кăткăс япала. *(Юрлаççĕ.)*

Атте мана шур пурт лартса пярас тетчĕ,
Йĕтем варĕнче чăрăш шăтса ӳссессĕн.
йĕтем варĕнче чăрăш шăтса, ай, ӳсес çук.
Атте мана шур пӳрт лартса, ай, парас çук.

Тулта пуртăпа йывăç каснă сасă илтĕнсе каять. Микитпа Çтаппан юрлама чарăнса итлеççĕ.

М и к и т. Касать. Мана, ывăлне, касса пăрахать! Юрла, Çтаппан!.. Чуна пырса тивтĕр, ăш çунтăр, куççулĕ юхса антăр!.. *(Ёсĕклесе йĕрсе ярать. Юрлаççĕ.)*

Шăллăм мана калуш илсе па,рас тетчĕ,
Сичмĕш номер çичĕ пуса юлсассăн.
Çичмĕш номер çичĕ пуса, ай, юлас çук,
Шăллăм мана калуш илсе, ай, парас çук.
*(Халăх юрри)*

Пуртă сасси хуткупăс сассине çĕнтерсех илтĕнме пуçлать: Тук! Тук! Тук!..

Çутă çӳнет.

Ч а р ш а в

## У л т т ă м ĕ ш к а р т и н а

Сĕм-çĕрле. Çил. Вăйлă çил. Çумăр пĕлĕчĕсем вată йăмра тăррисене перенес пек чупаççĕ. Çумăр çумасть. Анчах халь-халь çуса яма хатĕр.

Ялти магазин умĕ. Магазин умне çакнă электричество лампи вăйлă çилпе татăлса ӳкес пек сулланать. Тимошпа Микит асăрхануллăн

магазин патне пыраççĕ. Микит лампăна пăрса сӳнтерет. Тимош çăра уççи юраттарма тытăнать. Нумай та аппаланмасть, çăрана уçать.

Т и м о ш. Ну, хатĕр. Кĕрсе кай. Тĕрлĕрен ăпăр-тапăр-сем ан пуçтар. Пĕчĕк пултăр та хаклă пултăр. Укçине!.. Укçине йăлтах сăптăрса тух. Ну!.. Эпĕ кунта сыхлатăп.

Микит кĕрсе каять. Вăхăт нумаях та иртмест, В а л я тухать, ун хыççăн — Ç т а п п а н. Тимош, вĕсене курсан, магазин хыçне пытанать.

Ç т а п п а н. Тăхта, Валя!..

В а л я *(чĕнмест).* Ну, мĕн кирлĕ сана?

Ç т а п п а н. Миçе кун хыçран хăвалаттартăн. Пурнаймастăп эпĕ сансăр.

В а л я. Эпĕ пурăнатăп.

Ç т а п п а н. Чăн калаççĕ-и? *(Валя чĕнмест.)* Апла тĕрĕсех.

В а л я. Мĕн?

Ç т а п п а н. Качча тухать теççĕ сана.

В а л я. Сана пурпĕрех мар-им?

Ç т а п п а н. Çук, пурпĕрех мар!

В а л я. Чăнах-и, Степа?

Ç т а п п а н. Ан мăшкăлла манран!.. Тĕрĕсех-и?

В а л я. Тĕрĕс.

Ç т а п п а н. Кам вăл?

В а л я. Эсĕ ăна палламастăн. Хамăр ялсем мар.

Çтаппан Вальăна çемçен çупса ярать.

Ах, мĕнле лайăх. Татах çап-ха, Степа. Апла эсĕ мана юрататăн? Юрататăн, Степа?

Ç т а п п а н. Мĕншĕн асаплантаратăн эсĕ мана?

В а л я. Юратнипе.

Ç т а п п а н. Манăн тепĕр виçĕ кунтан Çара тухса каяс тулать.

В а л я. Степа...

Ç т а п п а н. Паян военкоматран повестка парса ячĕç. Ну, пăх-ха мана куçран. Кĕтсе пурăнăн-и?

В а л я. Кĕтетĕп, Степа.

Ç т а п п а н. Ку, акă, Сашка валли. Эп таврăннă çĕре миçере пулать-ха вăл?

В а л я. Улттă тултарать. Пĕлесчĕ сан, Степа, мĕн кăна калаçмасть пуль вăл. Çăварне хупма пĕлмест. Уссен, летчик пулатăп тет.

Ç т а п п а н. Асту, лайăх пăхса усра эп таврăниччен. Эпир унран поэт тăватпăр.

Валя. Степа... Апла эсё хирёç мар, Степа?

Çтаппан. Эп сана ку таринччен те чуптуса курман.

Валя. Чупту, Степа, мён чухлё чуптăвас килет, саван чухлё чупту... Чармастăп, Степа...

Çтаппан *(Вальăна питсăмартинчен чуптăвать).* Хм... Мёнле сан куççулё?..

Валя. Мёнле?

Çтаппан. Тăварлă, Валя... Юрататăп эп сана.

Валя. Юрату... Мёнрен пуçланать вал?

Çтаппан. Хёвелтен, чечексенчен, çёр çинчи пётём илемлё япаларан, суйма пёлменнинчен. Пёлетён-и, хăçан юратса пăрахнă эпё сана?

Валя. Хăçан?

Çтаппан. Саккăрмёш класра вёреннё чухне. Экскурсие кайсан.

Валя. Виçё çул каялла. Мёнле пурăнас-ха ман кунта сансăр? Кичемпе вилсе кайăн. Халь, каç выртсан та, ир тăрсан та, хăлхара сан хуткупăс сасси.

Çтаппан. Икё çул.

Валя. Сахал-им?

Çтаппан. Нумай та мар, сахал та мар.

Валя. Маншăн икё кун та икё çул пек туйăнать. *(Сасартăк.)* Степа, касса ил манăн çивётсене, асăнмалăх. Паян сана куратăп та, мирлешмесен, асăнмалăх çивётсене касса паратăп тесе тухрăм. Акă, хачă та хампа пёрлех илсе тухрăм. Ме, касса ил!

Çтаппан. Эс мён, ухмаха ертён-им?

Валя. Çук, Степа, ухмаха ермен... тен, еретёп те пуле. Ыйтатăп, касса ил иккёшне те. Эс вёсене юрататăн вёт? Илсе кай хăвпа пёрле инçетри-инçетри çёршыва. Мана манма пуçласан, çивётсене пăхса аса ил.

Çтаппан. Эпё сана ахаль те манмастăп. Нихçан та, Валя. Ку çивётсем санăн... Çивётсемсёр эсё Валя та мар.

Валя. Кам?

Çтаппан. Такам. Эп сана ачаранпах çивётсемпе курма хăнăхнă.

Валя. Каланă сана, кас! Акă!.. *(Хачă кăларса, икё çивётне те касса илет.)*

Стаипан. Мён туса хутăн эсё, Валя?

Валя. Ан тёкён! Май çавăн пек тăвас килет. Санран мана нимён те кирлё мар, Степа. Эп сана ахаль те ёмёр манас çук. Ме, тыт!.. *(Çивётсене парса ёлкёреймест, магазинта кёсъене чикмелЛи хунарпа çутатса тем шыранине асăрхаççё.)* Степа, кур-ха, магазинта...

Çтаппан. Кам унта?.. Митрахван килнё-ши? Мён

тăвать вăл унта çĕр хута? *(Магазин патне пырать.)* Мит рахван, эсё-и унта?

Магазинта çутă сӳнет.

Валя, кунта, тем, ырă мар. Чуп-ха, Сантăра кайса чĕн, халăха вăрат. Эпĕ кунта сыхлатăп.

Валя каять. Çтаппан уçнă çăрана асăрхать. Алăк хăлăпне урлă хурса, çăрапа çаклатса хурать. Шалтан: «Тимошка», — тесе кăшкăрни илтĕнет. Çак хушăра Тимош кĕтесрен тухать те Çтаппана çĕçĕпе чиксе пăрахать. Алăка хăвăрт уçать.

Тимош. Тух часрах. Асăрхарĕç пире. Сантăра чĕнме кайрĕç. Тарар!..

Микит *(магазинтан тухнă чух выртакан Çтаппанрин такăнать).* Ку кам? Çтаппан!.. Степа... Мĕнле капла? Кам сана?

Тимош. Тарар, Микит! Çьшсем килсе тухĕç.

Микит. Çтаппан, шăллăм... *(Тимоша.)* Эс турăн-и кăна?

Тимош. Парах ăна. Тытаççĕ пире, тарар!

Микит. Кай, Тимош, кай! Шуйттан шăтăкне кай! Ан чĕн мана... Шăллăм... Мĕншĕн пĕтертĕмĕр сана... Сан çамрăк ĕмĕрна?..

Халăх шавласа килни илтĕнет.

Тимош. Эс мĕн, ухмах-им? Тарар! Халăх килет ав. Тытаççĕ те — паянах решетка хыçне.

Микит. Пултăрах... Мана халь пурпĕрех. *(Çтаппана çĕклет.)* Эс кай... Тасал куç умĕнчен! Тасал, путсĕр!..

Тимош. А-а, хуть те мĕн ĕçле!.. *(Тухса тарма тăрать.)*

Анчах ăна чупса килекен çамрăксем асăрхаççĕ. «Акă вал, тарать»,— тесе, ун хыççăн чупаççĕ. Халăх пухăнать. Микит, Çтаппана йăтса, халăх умне тухать.

Валя. Мĕнле-ха ку?.. Ним айăпсăр çынна.. Айăплă çынсем айăпсăр çынна вĕлереççĕ... Мĕнле-ха ку?

Сантăр. Больницăиа илсе каймалла. Ачасем, чупăр машина патне!

Микит. К.аçару ыйтатăп. Айăплă эпĕ, айăплă! Сут тăвăр мана. Хăвăр сут тăвăр!.. *(Тимош çине кăтартать^)* Эп кăна мар, вăл та айăплă. Ун пек каласа, эпĕ çăмăллăх ыйтмастăп. Эп ун умĕнче парăмлă, çавăнпа вăл ман алурасене çыхса лартрĕ. Ылханатăп сана, Тимош! Халь эпе

сирĕн алăра, хуть те мĕн тăвăр мана. Хăть çакантах йытта çакса вĕлернĕ пек çакса хурăр!..

Çтаппан. Çынсем... Валя...

Валя. Кунта эпĕ, Степа.

Çтапиан. Аçта санăн çивĕтӳсем? Пар мана... Эп вĕсене... инçетри-инçетри çĕршыва... илсе каятăп.

Валя. Акă, Степа, ил.

Çтаппан. Мĕншĕн?.. Мĕншĕн вал мана? Манăн... Сара каяс килетчĕ.

Кăрăç васкаса чупса кĕрет. Çтаппана асăрхать.

Кăрăç. Çтаппан, ывăлăм... Каçар мана, ывăлăм, тен, эпĕ те айăплă. Çĕр çинче нумай начар япаласем пур, чи начарри — ăс çукки.

Çтаппан. Мĕн эсир... вилнĕ çын умĕнчи пек пуçăрсене уснă. Эп вилме шутламастăп... Малалла пăхăр. Манăн... Çара тухса каймалла... Тепĕр... виçĕ кунтан... *(Укме тăрать. Ăна Сантăрпа Валя тытаççĕ.)*

Кассăи-кассăн вĕрекен ăшă çил аякра çамрăксем алă çупса ташланă сасса илсе килет.

Чаршав